4117

А. С. ОТАЧКИН

# ЧĂВАШ ЧĔЛХИ

ПУÇЛАМĔШ ШКУЛĂН
III-мĕш КЛАСĔНЧЕ
ВĔРЕНМЕЛЛИ УЧЕБНИК

ЧĂВАШГИЗ
1948

А. С. ОТАЧКИН

# ЧӐВАШ ЧӖЛХИ

ПУҪЛАМӖШ ШКУЛӐН
ВИҪҪӖМӖШ КЛАСӖНЧЕ
ВӖРЕНМЕЛЛИ УЧЕБНИК

---

Обязательный экземпляр
Доставлен
Чувашской Книжной Палате
1 сентября 1948 г.
№ 95

ЧӐВАШ АССР ГОСУДАРСТВО ИЗДАТЕЛЬСТВИ
Шупашкар — 1948

*Шкулсенче усă курма Чăваш АССР Çутĕç министрĕ 1948 ç. апрелĕн 2-мĕшĕнче çирĕплетнĕ.*

ЧУВАШСКАЯ
КНИЖНАЯ ПАЛАТА
г. Чебоксары Чувашской АССР



## 1 §. Çу кунĕсене кам мĕнле irttерни çинчен каласа панисем.

1. Çу кунĕсене сирĕнтен кам ăçта irttернĕ? Кам ăçта çӳренĕ? Кам вăрманта пулнă? Кам хирте пулнă? Хирте мĕн-мĕн ĕçленĕ? Кам улăхра пулнă, унта мĕн-мĕн ĕçленĕ? Кам шыв хĕрринче пулнă? Кам кӳлĕ хĕрринче пулнă? Унта мĕн-мĕн курса сăнанă?

2. Кам хулара пулса курнă? Кам чугун çул станцинче пулнă? Кам пристань çинче пулнă? Унта мĕн-мĕн курса сăнанă?

3. Кам утарта пулнă? Кам арманта пулнă? Кам тимĕрçĕ лаççинче пулнă? Унта мĕн-мĕн курса сăнанă?

4. Кам тата ăçта пулнă? Унта мĕн-мĕн курса сăнанă, мĕн çинчен пĕлнĕ?

***1-мĕш хăнăхтару.*** Çак катартса пана ыйтусем тăрăх суйласа илсе, хăвăр каласа памалли япаласен ячĕсене çырса хурăр. Çав япаласем çинчен хăвăр мĕн пĕлнине каласа парăр.

Тырă пусси. Юханшыв. Кӳлĕ. Шурлăх. Вăрман. Çимĕç пахчи. Хула. Машинăпа трактор станцийĕ. Чугун çул станцийĕ. Шыв арманĕ. Çил арманĕ. Вуламалли çурт. Сĕт ферми. Сысна ферми.

*2-мĕш хăнăхтару.* Ыйтусене йĕркипе каласа парăр.

Эсир çулла вăрмана кайнă-и? Кампа пĕрле кайнă? Мĕнле япаласем илсе кайнă? Çул çинче мĕн-мĕн тунă? Вăрманта мĕн-мĕн курнă, мĕн тунă? Каялла мĕнле таврăннă? Вăрмантан мĕн-мĕн илсе таврăннă?

*3-мĕш хăнăхтару.* Сирĕн вăрманта мĕнле йывăçсем ӳсни çинчен каласа парăр. Хăвăр пĕлекен йывăçсен ячĕсене каласа тухăр. Сирĕн вăрманта мĕнле йышши кăмпасем ӳсеççĕ? Мĕнле йышши çырласем пулаççĕ? Унта мĕнле вĕçен кайăксем пурăнаççĕ? Вăрманта мĕнле тискер кайăксем пур? Тата вăрманта мĕнле-мĕнле япаласем пур?

*4-мĕш хăнăхтару.* Ыйтусем тăрăх çакăн пекех хăвăр çырса хунă ытти япаласем çинчен каласа парăр (юханшыв, кӳлĕ, тырă пусси т. ыт. те).



*5-мĕш хăнăхтару.* Çак йывăççене ӳкерсе илĕр те ӳкерчĕксем айне вĕсен ячĕсене çырăр.

*6-мĕш хăнăхтару.* Малтан вăрманта ӳсекен йывăççен ячĕсене, унтан пахчара ӳсекен йывăççен ячĕсене çырăр.

Юман, чăрăш, ăвăс, çăка, пулмуççи, чие йывăççи, хурлăхан, хăмлаçырли, тополь, груша, слива, йĕлме, кавăрç, çӳçе, сирень, хурама.

***7-мĕш хăнăхтару.*** Ӳкерчĕксене пăхса тухăр, çаканта ӳкерсе кăтартнă япаласен ячĕсене çырăр.



***8-мĕш хăнăхтару.*** Çак картинăна тĕплĕн сăнаса пăхса тухăр.



К а л а с а   п а р ă р: Картина çинче çулталăк хушшин хăш вахăтне ӳкерсе кăтартнă?

Картина çинче мĕнле-мĕнле япаласене ӳкерсе кăтартнă?
Мĕншĕн йывăççен çулçисем çукпа пĕрех?
Çилос башнисем пушă-ши, тулли-ши?
Хур кайăксем ăçталла вĕççе каяççĕ?
Çулталăк хушшин мĕнле вăхăчĕ çывăхарса килет?
Çак картина тăрăх хăвăр калав тăвăр. Калав ятне хăвăр тупса хурăр.

## 2 §. I тата II классенче вĕреннине аса илни.

*9-мĕш хăнăхтару*. Çырса илĕр. Малти уçă сасăсене пĕр йĕрпе, кайри уçă сасăсене икĕ йĕрпе аялтан туртăр.

### Тăван çĕршыв.

Чаплă та мухтавлă эсĕ, Тăван çĕршыв! Çуралса кун çути курнă кашни этемшĕн эсĕ тăван аннерен те çывăхрах, хурăнташран та пахарах, пурăнăçран та хаклăрах.

Сарлака та мухтавлă эсĕ, Тăван çĕршыв! Эсĕ пирĕн чĕресене савăнăçпа хаваслăх тултаратăн. Эсĕ пирĕн хушăмăртан кунсерен çĕнĕрен çĕнĕ геройсем çуратса кăларатăн.

*10-мĕш хăнăхтару*. Предложенисенчи кашни сăмаха сыпăкăн-сыпăкăн уйăрса çырса илĕр. Çемçе сыпăксене пĕр йĕрпе, хытă сыпăксене икĕ йĕрпе аялтан туртăр.

### Шупашкар.

Шупашкар—Чăваш совет çĕршывĕн тĕп хули. Совет влаçĕ вăхăтĕнче Шупашкар пысăк та илемлĕ хула пулса тăчĕ. Хулара аслă та такăр урамсем, темиçе хутлă çуртсем, садсем куçа илĕртеççĕ. Кунта халь пысăк заводсем, фабрикăсем пур. Хула çулсеренех ӳссе, чаплăланса пырать.

Тĕслĕх. *Шу-паш-кар—Чă-ваш со-вет çĕр-шы-вĕн тĕп ху-ли.*

*11-мĕш хăнăхтару*. Вуласа тухăр, хытă сăмахсене, çемçе сăмахсене тата хутăш сăмахсене кăтартса парăр.

Паянхи Шупашкар ĕнерхи мар. Ыранхи хула тата пысăкрах, илемлĕрех те чаплăрах пулĕ. Хулара пурăн-

малли çуртсем, шкулсем, больницăсем, садсем, театрсем хушăнĕç. Паянхи çунатлă ĕмĕтсем ыран пурăнăçа кĕрĕç.

*12-мĕш хăнăхтару.* Предложенисене çырса илĕр, сăмах варринче Ь палла лартнă сăмахсене аялтан йĕр туртăр, Ь палла мĕн пирки лартнине ăнлантарса парăр.

1. Санька ĕнер нумайччен конькипе ярăнса çӳрерĕ. 2. Хальхи Шупашкар—ĕлĕкхи мар. 3. Пирĕн шкула паян больницăран тухтăр килмелле. 4. Пирĕн районра культура çурчĕ пур. 5. Эпир çулла Горький хулине кайса килтĕмĕр. 6. Атьăр тухар урама тĕрлĕ вăйă выляма.

*13-мĕш хăнăхтару.* Предложенисене çырса илĕр. Паллă тунă сăмахсенче Ь палла мĕншĕн лартнине ăнлантарса парăр.

1. Марьепе Тарье вăрмана кăмпа татма кайрĕç. 2. Эпĕ стена хаçачĕ валли статья çыртăм. „Статью хаçата кĕртме юрăхлă“,—терĕ мана редактор. 3. Паян шкулта кино кăтартасси çинчен объявлени çапнă.

*14-мĕш хăнăхтару.* Предложенисене вуласа тухăр, паллă тунă сăмахсене мĕншĕн çапла çырнине ăнлантарса парăр.

1. Хăмла **шалçа** тăрăх явăнса ӳсет. 2. Пулă **вăлчи** тутлă. 3. Колхоз лашисем çула тухма **шанчăклă**. 4. Пирĕн колхоз кăçал пысăк **мунча** лартрĕ. 5. Кĕркунне йывăç **çулçисем саралчĕç**.

*15-мĕш хăнăхтару.* Предложенисене çырса илĕр. Паллă тунă сăмахсене мĕншĕн çапла çырнине ăнлантарса парăр.

1. Эпĕ çарти пичче патне **çыру çыртăм**. 2. Пирĕн вăрманта çулла **çырла** нумай пулать. 3. Эпĕ **чылайранпа** хулара пулман. Хула пирĕнтен **çывăх** мар. 4. **Çыртăм, çыртăм** сăввăма, шăрантартăм юррăма, çĕршывăма **чысласа**.

## 3 §. Сăмах составĕ.

*16-мĕш хăнăхтару.* Статьяна вуласа тухăр. **Вăрман** сăмах кашни предложенире мĕнле улшăннине асăрхăр.

### В ă р м а н.

Пирĕн ял çумĕнчех **вăрман** пур. **Вăрманпа** юнашар шыв юхса выртать. **Вăрманăн** лаптăкĕ чылай пысăк.

Çуллахи кунсенче эпир час-часах **вăрмана** çÿретпĕр. **Вăрманăн** илемĕпе савăнатпăр. Çырла вăхăтĕнче **вăрмана** çырла татма çÿретпĕр. **Вăрманта** кайăксем юрлаççĕ. Çулла **вăрмантан** тухас та килмест.

***17-мĕш хăнăхтару.*** „Вăрман" ятлă статьяран вăрман сăмаха пур предложенисенчен те çырса илĕр, сăмахĕсене пĕрпĕрин айне туса çырăр. Сăмах вĕçне дефиспа уйăрса çырăр.

Тĕслĕх: *Вăрман.*
*Вăрман-па.*

***18-мĕш хăнăхтару.*** а) „Кăмпа" ятла статьяна çырса илĕр. Паллă тунă **кăмпа** сăмахăн кашни форми хыççăн скобкăра унăн ыйтăвне лартăр: ***мĕн?*** е ***мĕнĕн?*** е ***мĕнре?*** е ***мĕнпе?*** т. ыт. те. б) **Кăмпа** сăмахăн кашни формине пĕр-перин айне туса çырса илĕр. Сăмах вĕçне кĕске йĕрпе—дефиспа уйăрса çырăр.

## К ă м п а.

Пирĕн ял çумĕнчи **вăрманта кăмпа** нумай пулать. Çуртырри вырса пĕтерсен, эпир **кăмпана** çÿретпĕр. Пирĕн анне **кăмпаран** тĕрлĕ апат **хатĕрлет.**

***19-мĕш хăнăхтару.*** Çак сăвва вуласа тухăр. Паллă тунă сăмах кашни предложенире мĕнле улшăннине асăрхăр.

## Тимĕрçĕ.

Хĕвел пăхать тÿпере.
**Тимĕрçĕ** шаккать **тимĕре.**
Хĕртнĕ **тимĕр** лапчăнать,
чăнкки-чанкки янăрать.

**Тимĕрçĕ** алли пит ăста,
тем те тăвать **тимĕртен.**
**Тимĕрçĕсем** колхозра—
питĕ кирлĕ ăстасем.



**Тимĕр, тимĕр-çĕ, тимĕр-тен,** тимĕр-çĕ-сем сăмахсене танлаштарса пăхăр. **Тимĕр**—сăмах тĕпĕ. **Тимĕр-çĕ, тимĕр-тен, тимĕр-çĕ-сем** сăмахсенче виççĕшĕнче те тĕпĕ **тимĕр,** анчах, тĕпĕсĕр пуçне, сăмахсен вĕçĕнче **çĕ, тен, çĕсем** аффикссем пур.

Аффикс хушӑнса пулна сӑмаха **аффикслӑ сӑмах** теççӗ. Аффикс хушӑнман сӑмаха **аффикссӑр сӑмах** теççӗ. Аффикссӑр сӑмах пӗтӗмӗшпех **сӑмах тӗпӗ** пулса тӑрать. Ун çумне аффикссем хушса урӑх сӑмахсем тума пулать.

***20-мӗш хӑнӑхтару.*** Çакӑнта панӑ сӑмахсене кӗртсе, предложенисем тӑвӑр.

Тӗслӗх: *Пирӗн колхозӑн лашисем лайӑх.*

| | |
|---|---|
| колхоз-ӑн | вӑрман-лӑ |
| колхоз-а | вӑрман-лӑх |
| колхоз-па | вӑрман-ти |
| колхоз-ра | вӑрман-ӗ |
| колхоз-ран | вӑрман-шӑн |

Сӑмаха улӑштарма е пӗр сӑмахран тепӗр сӑмах тума сӑмах тӗпӗ çумне аффикс хушмалла. Аффикссем—сӑмахӑн **улшӑнакан** пайӗ. Сӑмах тӗпӗ—сӑмахӑн **улшӑнман** пайӗ.

***21-мӗш хӑнӑхтару.*** Çак сӑмахсене çырса илӗр. Сӑмахӑн тӗпне аффиксран уйӑрса çырӑр.

Тӗслӗх: *Пахча-сем.*

| | | | | |
|---|---|---|---|---|
| пахчасем | шывлӑ | чӑрӑшлӑ | совхоз | паянхи |
| пахчаçӑ | шывсӑр | чӑрӑшӑн | совхозӑн | ӗнерхи |
| пахчалӑх | шывсем | чӑрӑшлӑх | совхозра | каçхи |
| пахчам | шывӑм | чӑрӑшсӑр | совхоза | кӗрхи |

***22-мӗш хӑнӑхтару.*** Çакӑнта çырнӑ сӑмахсене вуласа тухӑр, унтан çырса илӗр. Сӑмах аффиксне сӑмах тӗпӗнчен уйӑрса çырӑр.

1. Пӳрт, пӳрте, пӳртпе, пӳртре, пӳртрен.
2. Пӳртлӗх. Пӳртри. Пӳртлӗ.
3. Пуçлӑх. Пуçла. Пуçӑм. Пуçри. Пуçламӗш.
4. Ларчӑк. Хырчӑк. Шанчӑк.
5. Ӗçле. Ӗçлӗ. Ӗçри. Ӗçчен.

***23-мӗш хӑнӑхтару.*** Тӗп сӑмахсенчен урӑх сӑмахсем тунӑ чухне час-часах çак аффикссемпе усӑ кураççӗ:

1. ***çӑ, çӗ*** (пулӑçӑ, кӗтӳçӗ, пахчаçӑ, тимӗрçӗ, вӗçевçӗ).
2. ***лӑх, лӗх*** (хуçалӑх, хурӑнлӑх, вӗтлӗх, шӗшкӗлӗх, шурлӑх, арпалӑх, кӗпелӗх).

3. ***у***, ***ӳ*** (çыру, лару, суту, ăмăрту, вĕренӳ, çĕкленӳ).

4. ***лă***, ***лĕ***, ***ллă***, ***ллĕ*** (ăслă, вăйлă, кĕрнеклĕ, тĕреклĕ, пахчаллă, йĕркеллĕ).

5. ***сăр***, ***сĕр*** (вăрмансăр, çилсĕр).

6. ***ла***, ***ле***, ***лла***, ***лле*** (кайăкла, чĕкеçле, лапталла, чушкăлла, пуканелле).

7. ***ри***, ***ти***, ***чи*** (ялти, хулари, варринчи).

8. ***хи*** (çурхи, кĕрхи, хальхи, пĕлтĕрхи, ĕлĕкхи).

9. ***тар***, ***тер***, ***ттар***, ***ттер*** (çыртар, вĕртер, вулаттар, ĕçлеттер).

***24-мĕш хăнăхтару.*** Çак статьяна çырса илĕр. Сăмахăн тĕпне аффиксран уйăрса çырăр.

## К ĕ т ӳ.

Хĕвел çӳле улăхнă. Кĕтӳ тапăрта выртать. Выльăхсем хăшĕ выртаççĕ, хăшĕ шыв ĕçеççĕ. Качакасем çӳллĕ çыран çине улăхаççĕ. Пĕр-пĕрне мăйракисемпе шăк-шак! тĕксе илеççĕ. Кĕтӳçĕ апат çиет. Кăнтăр иртрĕ. Выльăхсем канчĕç. Кĕтӳçĕ выльăхсене курăк çитерме хирелле хăваласа кайрĕ.

***25-мĕш хăнăхтару.*** Çак сăмахсене вуласа тухăр. Хытă сăмахăн аффиксĕ мĕнле пулать? Çемçе сăмахăн аффиксĕ мĕнле пулать?

| | | | |
|---|---|---|---|
| пулă-çă | хăват-лă | телей-лĕ | тимĕр-çĕ |
| пахча-çă | хавас-лă | кĕрнек-лĕ | çĕвĕ-çĕ |
| çыру-çă | хастар-лă | тирпей-лĕ | шерепе-ллĕ |
| сăвă-çă | паттăр-лă | йĕрке-ллĕ | шерепе-сĕр |

Хытă сăмахăн аффиксĕ те **хытă** пулать, çемçе сăмахăн аффиксĕ те **çемçе** пулать.

***26-мĕш хăнăхтару.*** Çак сăмахсене, çумне ***лă*** е ***лĕ*** аффикс хушса, çырса илĕр. Хытă сăмах çумне ***лă*** аффикс хушăнать, çемçе сăмах çумне ***лĕ*** аффикс хушăнать.

| | | |
|---|---|---|
| вăй-*лă* | сĕт... | турат... |
| тĕп... | нӳр... | хăват... |
| хут... | сорт... | çунат... |
| шут... | чул... | кăвар... |

*27-мӗш хӑнӑхтару*. Ҫак аффикссӑр сӑмахсенчен, май килекен аффикссем хушса, аффикслӑ сӑмахсем тӑвӑр.

| | | |
|---|---|---|
| ӑрат | хыр | кӗпе |
| ҫурт | хурӑн | арпа |
| пӳрт | вӑрман | кӗрӗк |
| сӑрт | ҫӑка | сӑхман |

*28-мӗш хӑнӑхтару*. Ҫак сӑмахсен тӗпӗсене тата аффиксӗсене асӑрхӑр. Хытӑ сӑмахсем ҫумне мӗнле аффикссем хушӑнаҫҫӗ?

| | | | |
|---|---|---|---|
| ача-сем | картус-ӗ | тӑваттӑ-мӗш | ҫирӗп-скер |
| ҫын-сем | ҫӑлкуҫ-ӗ | вуннӑ-мӗш | лайӑх-скер |
| паттӑр-сем | саппун-ӗ | кайнӑ-ччӗ | паттӑр-скер |
| маттур-сем | ур-и | ҫитнӗ-ччӗ | маттур-скер |

***Сем, ӗ, и, мӗш, ри, хи*** аффиксем—**мӑшӑрсӑр** аффикссем. Вӗсен хытӑ мӑшӑрӗ ҫук, ҫавӑнпа вӗсем хытӑ сӑмахсем ҫумне те ҫемҫе формӑпах хушӑнаҫҫӗ.

*29-мӗш хӑнӑхтару*. Ҫакӑнти пӗлтерӗшӗ енчен пӗр пекрех предложенисен уйрӑмлӑхне кӑтартса парӑр.

| **Пӗрреллӗ хисеп.** | **Нумайлӑ хисеп.** |
|---|---|
| Арман авӑр-ать. | Арман-сем авӑр-аҫҫӗ. |
| Аэроплан вӗҫ-ет. | Аэроплан-сем вӗҫ-еҫҫӗ. |
| Автомобиль чуп-ать. | Автомобиль-сем чуп-аҫҫӗ. |
| Трактор кӗрл-ет. | Трактор-сем кӗрл-еҫҫӗ. |

*сем* аффикс япала нумаййине пӗлтерет.

*аҫҫӗ, еҫҫӗ* аффикссем ӗҫе нумаййӑн тунине пӗлтереҫҫӗ. (*Армансем авӑраҫҫӗ. Тракторсем кӗрлеҫҫӗ*).

*ать, ет* аффикссем ӗҫе пӗччен тунине пӗлтереҫҫӗ.

(*Арман авӑрать. Трактор кӗрлет*).

## 4 §. Пĕр тĕпрен пулнă сăмахсем.

*Каç* тĕпрен пулнă тăванла пĕлтерĕшлĕ сăмахсене п ă х с а  т у х ă р.




***30-мĕш хăнăхтару.*** *Пуç* тĕпрен тăванла пĕлтерĕшле сăмахсем тăвăр, çав сăмахсене *каç* тĕпрен пулнă сăмахсем пекех вырнаçтарса тухăр.

***31-мĕш хăнăхтару.*** Предложенисене çырса илĕр. *Ăс* тĕпрен пулнă сăмахсене аялтан йĕр туртса паллă тăвăр.

Эпир аннепе хире тырă вырма кайрăмăр.

Анне мана çăлкуçĕнчен шыв ăсса килме хушрĕ. Эпĕ витре илтĕм те шыв ăсма кайрăм. „Çăл тарăн мар, шыва ăсса кăларма ăскăч ил", — терĕ мана анне.

***32-мĕш хăнăхтару.*** *Лар, вула, çыр* тĕпсенчен пĕр тĕплĕ сăмахсем тăвăр, çав сăмахсене çырса хурăр.

## 5 §. Хутлă сăмахсемпе мăшăр сăмахсем.

***33-мĕш хăнăхтару.*** Çак статьяна вуласа тухăр. Паллă тунă сăмахсем мĕнле пулнине асăрхăр.

### П и р ĕ н  й ы в ă ç  п а х ч и.

Пирĕн пĕчĕк йывăç пахчи пур. Ăна **асаттепе асанне** хăйсем çамрăк чухнех лартнă. Пахчара **улмуççисем** тата хурлăхан йывăççисем пур.

Пирĕн пахчара **панулми** ăнса пулать. Хăш туратсем хăйсен улмисене аран çĕклесе лараççĕ. Асаттепе атте ытла усăнса анакан туратсене **йӳплĕ** тĕкĕсемпе тĕкĕлесе хураççĕ. Кашни **кĕркуннех** эпир пахчаран **панулми** татса кĕретпĕр.

Пирĕн **панулми çулталăкĕпех** çиме çитет. Анне хĕлле те кашни апатрах пире **тĕпсакайĕнчен** илемлĕ **панулмисем** илсе тухса парать.

Çакăнта паллă тунă сăмахсем кашниех икĕ е виçĕ тĕрле пĕлтерĕшлĕ сăмах пĕрлешнипе пулнă: асатте—аслă атте, асанне—аслă анне, улмуççи—улма йывăççи, тĕпсакай—тĕп сак айĕ.

Тĕрлĕ пĕлтерĕшлĕ икĕ е виçĕ сăмах пĕрлешнипе пулнă сăмахсене **хутлă сăмахсем** теççĕ.

Хутлă сăмахсене пĕрле çыраççĕ.

*34-мĕш хăнăхтару.* Çак хутсăр сăмахсене пĕрлештерсе, хутлă сăмахсем тăвăр.

Тĕслĕх: *Ура айĕ—урай.*

| | | | |
|---|---|---|---|
| ура айĕ | кĕр кунĕ | çул пуçĕ | хура тулă |
| тĕшĕ тырă | çăл куçĕ | шыв сикки | çăра уççи |
| çĕр улми | çĕр кăмрăкĕ | тунти кун | çур тырри |
| çур кунĕ | авăн карти | çăм атă | ĕç халăхĕ |

*35-мĕш хăнăхтару.* Кĕркунне, çуркунне, çурçĕр, кăçал, тырпул, анкарти хутлă сăмахсене кĕртсе предложенисем тăвăр.

Тĕслĕх: *Папанинпа унăн юлташĕсем Çурçĕр полюсĕ патĕнче хĕл каçнă.*

Калаçнă чухне час-часах, пĕр евĕрлĕ япаласене пĕрлештерсе, икĕ пĕр йышши сăмаха мăшăрлатса калаççĕ: *çăкăр-тăвар, ата-пушмак.* Кун йышши сăмахсен пĕлтерĕшĕ уйрăм сăмах пĕлтерĕшĕнчен анлăрах пулать. Çакăн пек пĕлтерĕше анлăлатса, пĕр евĕрлĕ япаласене пĕрлештерсе, мăшăрлатса калакан сăмахсене **мăшăр сăмахсем** теççĕ.

*36-мĕш хăнăхтару.* Предложенисене çырса илĕр. Хутлă сăмахсене аялтан пĕр йĕрпе, мăшăр сăмахсене икĕ йĕрпе туртăр.

1. Шыв-шур типичченех çураки пуçланать. 2. Лайăх ĕçлекен колхозсем çуракине пилĕк-ултă кунтах пĕтереççĕ. 3. Колхоз уй-хирĕсенче халь тракторсем, комбайнсем ĕçлеççĕ. 4. Ĕлĕкхи хăрăк-харăк сухапуç вырăнне халĕ пысăк машинăсемпе ĕçлеççĕ.

Асăрхăр: Мăшăр сăмахсене дефиспа çыхăнтарса çыраççĕ.

*37-мĕш хăнăхтару.* Çак сăвва çырса илĕр. Хутлă сăмахсене аялтан пĕр йĕрпе, мăшăр сăмахсене икĕ йĕрпе туртăр.

## Çамрăклăх сăвви.

Çĕршывра сÿнми çăлкуçăн
яшлăх, çамрăклăх тапать.
Харсăр çамрăклăх! Тап уççăн,
эсĕ тивĕç мухтава.
Çеçенхир, сăрт-ту, шыв-шурĕ,
сывлăш, тинĕс, вăрмансем,—
пур çĕрте те сăвă-юрă,
янăраççĕ юрăсем.
Заводра та, уй-хирте те
эп куратăп, эп илтетĕп,—
çуркунне пек пур çĕрте те
çамрăклăх вĕрет пирте.
Хум-шавпа карап пырать-и,
парашют-и карăнать,—
пур çĕрте те-çке куратăп,
яшлăх, çамрăклăх, сана.
Çĕнтерÿллĕн утăмлатпăр
Ленин—Сталин çулĕпе.
Çĕршыв аслă, çулĕ такăр.
Аслă çулпуç пирĕнпе.

*38-мĕш хăнăхтару.* „Тăван сăмах“ кĕнекерен „Пуканесен бригади“ ятлă сăвва вуласа тухăр. Сăвăра тĕл пулакан хутлă сăмахсене уйрăммăн, мăшăр сăмахсене уйрăммăн çырса илĕр.

*39-мĕш хăнăхтару.* Çак хутлă сăмахсем мĕнле пулнине ăнлантарса парăр.

*Кăçал, кĕçĕр, питçăмарти, куçхарши, кĕрçип, умсăмах, тымарçимĕç, çĕрмамăк, чĕрчун, алшăлли, уйпуç, улмуççи, çăраççи, çутçанталăк, малъен, алкум, аслати.*

*40-мĕш хăнăхтару.* Çак мăшăр сăмахсене кĕртсе предложенисем тăвăр.

Чăл-пар, уй-хир, пит-куç, кайăк-кĕшĕк, выльăх-чĕрлĕх, çăкăр-тăвар, катка-пичке, савăт-сапа.

Тĕслĕх: *Ачасем чăл-пар силанчĕç.*



*41-мĕш хăнăхтару.* Картина тăрăх çырнă çак пĕчĕк калава çырса илĕр. Хутлă сăмахсене пĕр йĕрпе, мăшăр сăмахсене икĕ йĕрпе аялтан туртăр.

## Çуркуннехи вăрман.

Çуркунне вăрман хĕл ыйхинчен вăранать. Йывăçсем симĕс çулçăсем кăлараççĕ. Уçланкăсенче сарă-сарă, хĕрлĕ-хĕрлĕ, кĕрен-кăвак тата шурă чечексем илемлĕн курăнса лараççĕ. Вăрманта кайăк-кĕшĕк темĕн чухлех. Вĕсен сасси-юррипе вăрман янăраса тăрать. Хăш чухне аслатиллĕ çумăр килсе çăвать. Анчах вăл нумая пымасть, часах иртсе каять. Çумăр хыççăн вăрманти çутçанталăк пушшех илемленет. Вăрманти çырмасем тăрăх шыв шăнкăр-шăнкăр! туса юхать.

*42-мĕш хăнăхтару.* Çак картина çине пăхса, хăвăр тĕллĕн „Кĕркуннехи вăрман“ ятлă пĕчĕк калав çырăр.



## 6 §. Сăмахсен предложенири çыхăнăвĕ. Предложени членĕсем.

*43-мĕш хăнăхтару.* Çак предложенисене вуласа тухăр. Унтан кашни предложенири сăмахсене ыйтусем тăрăх пĕр-пĕринпе мăшăрăн-мăшăрăн çыхăнтарса çырăр.

### Çуллахи ир.

1. Хĕрлĕ шурăмпуç пĕлĕте витрĕ. 2. Кĕтӳç кĕтӳ патне васкать. 3. Халăх хире тухрĕ. 4. Ачасем ыйхăран вăранчĕç. 5. Хирте машинăсем хытă кĕрлеççĕ. 6. Колхозниксем хирте савăнса ĕçлеççĕ.

1. (*Мĕн?*) .. витрĕ. (*Мĕнле?*)... шурăмпуç... (*Мĕне?*)... витрĕ.

2. (*Кам?*)... васкать. (*Ăçта?*)... васкать.

3. (*Кам?*)... тухрĕ. (*Ăçта?*)... тухрĕ.

4. (*Камсем?*)... вăранчĕç. (*Мĕнтен?*)... вăранчĕç.

5. (*Мĕнсем?*)... кĕрлеççĕ. (*Ăçта?*)... кĕрлеççĕ. (*Мĕнле?*)... кĕрлеççĕ.

6. (*Камсем?*)... ĕçлеççĕ. (*Ăçта?*)... ĕçлеççĕ. (*Мĕнле?*)... ĕçлеççĕ.

Тĕслех: *Шурăмпуç витрĕ. Хĕрлĕ шурăмпуç. Пĕлĕте витрĕ.*

*44-мĕш хăнăхтару.* 155-мĕш хăнăхтарури пекех тăвăр.

### Улăхра.

1. Колхозниксем улăха тухрĕç. 2. Вĕсем унта утă çулаççĕ. 3. Аслă улăх янăраса тăрать. 4. Çулакансем юрă юрлаççĕ. 5. Улăхра çава сасси илтĕнет. 6. Пурте хĕпĕртесе, ăмăртса ĕçлеççĕ.

1. (*Камсем?*)... тухрĕç. (*Ăçта?*)... тухрĕç.

2. (*Камсем?*)... çулаççĕ. (*Мĕн?*)... çулаççĕ. (*Ăçта?*) .. çулаççĕ.

3. (*Мĕн?*)... янăраса тăрать. (*Мĕнле?*)... улăх.

4. (*Камсем?*)... юрлаççĕ. (*Мĕн?*)... юрлаççĕ.

5. (*Мĕн?*)... илтĕнет. (*Ăçта?*)... илтĕнет.

6. (*Камсем?*)... ĕçлеççĕ. (*Мĕнле?*)... ĕçлеççĕ.

Тĕслĕх: *Колхозниксем тухрĕç. Улăха тухрĕç.*

Предложенири сăмахсем пĕр-пĕринпе пĕлтерĕшĕ тăрăх мăшăрăн-мăшăрăн çыхăнса тăраççĕ. Кашни мăшăрĕ тепĕр мăшăрпа çыхăнса тăрать. Пĕр мăшăрăн пĕр сăмахĕ тепĕр мăшăрăн сăмахĕпе çыхăнса çĕнĕ мăшăр пулать. Çапла майпа çыхăнса, сăмахсен ушкăнĕ **уйрăм шухăша пĕлтерет, предложени** пулса тăрать.

***45-мĕш хăнăхтару.*** Çак предложенисенчи сăмахсене мăшăррăн çыхăнтарса çырăр.

1. Тăрă пĕлĕтре тăри юрлать. 2. Мăн Çавал авкаланса юхать. 3. Ешĕл улăх сарăлса выртать. 4. Вĕтлĕх вăрман ешерсе ларать. 5. Пĕчĕк ачасем вăйă выляççĕ.

Тĕслĕх: *Тăри юрлать. Пĕлĕтре юрлать. Тăрă пĕлĕтре.*

***46-мĕш хăнăхтару.*** Çак предложенисенчи сăмахсем пĕрпĕринпе епле çыхăнса тăнине чертĕжпа тата ыйтусемпе кăтартса парăр.

Сарă хĕвел йăлтăртатса тухрĕ. Ирхи сывлăм кĕмĕл пек йăлтăртататать. Лăпкă çил вĕрет. Çутă шыв тўлеккĕн юхать. Шывра шурă хурсем ишеççĕ. Улăхра пăрусем çўреççĕ. Хирте сарă тулă хумханса ларать.

Тĕслĕх:




***47-мĕш хăнăхтару.*** Аялта кăтартнă сăмахсенчен предложенисем тăвăр. Сăмах вĕçĕсене предложенире кирлĕ пек улăштарăр. Палла тунă сăмахсене ан улăштарăр.

1. Çанталăк, **ăшă**, тăр.
2. Хир, **тырăсене**, пуçтар, **кĕнĕ**.
3. **Колхозниксем**, машина, **авăн**, çап.
4. **Ачасем**, шкул, çўре.



Чувашская Книжная палата г. Чебоксары Чувашской АССР

*48-мӗш хӑнӑхтару.* Ҫак картинӑсем тӑрӑх „Ҫумӑр айне пулни“ ятлӑ пӗчӗк калав ҫырӑр. Калавра миҫе предложени пулчӗ? Кашни предложенире мӗн ҫинчен каланӑ?





*49-мӗш хӑнӑхтару.* Аялта кӑтартнӑ темӑсенчен пӗрне суйласа илӗр те ун тӑрӑх пӗчӗк калав ҫырса парӑр.

1. Эпӗ вӑрмана кайни.
2. Эпӗ хула курни.
3. Эпӗ поезд курни.
4. Эпӗ пароход курни.
5. Эпӗ пуҫласа кино курни.
6. Эпӗ комбайн курни.

*50-мӗш хӑнӑхтару.* Предложенисене вуласа тухӑр. Паллӑ тунӑ сӑмахсем мӗне пӗлтереҫҫӗ, мӗнле ыйтупа ыйтӑн аҫҫӗ?

1. Анлӑ **Атӑл** лӑпкӑн **юхать.**
2. Кӑтра **вӑрман** кашласа **ларать.**
3. Шурӑ **пароход**васкаса **иртет.**
4. **Пулӑҫӑ** вӑлтапа **ларать.**

*51-мӗш хӑнӑхтару.* Ҫак сӑвӑран, япалана пӗлтерекен паллӑ тунӑ сӑмахсене тата вӗсемпе ҫыхӑнса тӑракан япала мӗн тунине пӗлтерекен сӑмахсене ҫырса илсе, ансӑр предложенисем тӑвӑр.

Тӗслӗх: *Хӗвел йӑлтӑртатать.*

Сар **хĕвел** йăлтăртататъ. **Вăрман** кашласа ларать.
Пĕтĕм **тĕнче** савăнать. Чăпар **кукук** авăтать.
**Эпир** хире тухатпăр. Шывра **хурсем** ишеççĕ.
**Эпир** юрă юрлатпăр. Хирте **çынсем** ĕçлеççĕ.

Ут çулаççĕ сар **хĕрсем.**
Ут çулаççĕ **каччăсем.**
Хавас **юрă** янăрать.
Ĕçри **халăх** савăнать.

Предложенире кам е мĕн çинчен каланине пĕлтерекен сăмаха **подлежащи** теççĕ. Предложенире подлежащи мĕн тунине е унпа мĕн пулнине пĕлтерекен сăмаха **сказуемăй** теççĕ.

Подлежащие **кам?** е **мĕн?** ыйтусем тăрăх пĕлеççĕ.

Сказуемăя **мĕн тăвать? мĕн тунă? мĕн тăвĕ?** ыйтусем тăрăх пĕлеççĕ.

Подлежащипе сказуемăй—предложенин аслă членĕсем.

***52-мĕш хăнăхтару.*** Çакăнта кăтартса панă кашни япала мĕн туни çинчен е унпа мĕн пулни çинчен каласа парăр. Кирлĕ сказуемăйне аялта çырнă сăмахсенчен суйласа илĕр.

*Тимĕрçĕ шаккать.* Çĕвĕçĕ.... Писатель....
*Хĕвел пăхать.* Çил.... Пĕлĕт.... Шыв....
*Пăчăкă тататъ.* Сава.... Мăлатук.... Çĕçĕ....
*Кукук авăтать.* Хур.... Шăпчăк.... Кăвакал....

Кирлĕ сăмахсем: ***какалать, çырать, çĕлет, касать, шаккать, савалать, юрлать, нартлататъ, юхать, вĕрет, шăвать.***

***53-мĕш хăнăхтару.*** Çакăнта панă кашни сказуемăй çумне подлежащи тупăр. Подлежащипе сказуемăйне çырса хурăр.

*Лаша кĕçенет.*
. . . юрлать.
. . . кăтиклет.
. . . мĕкĕрет.
. . . авăтать.
. . . вылять.

*Çерçи чĕвĕлтетет.*
. . . кранклататъ.
. . . найлататъ.
. . . сĕрлет.
. . . кваклататъ.
. . . макăрать.

Кирлӗ сӑмахсем: *хурт, автан, чӑх, тӑри, ӗне, шапа, сурӑх, вӑрӑмтуна, ҫахан, путек.*

***54-мӗш хӑнӑхтару.*** Ҫакӑнта панӑ кашни подлежащи ҫумне сказуемӑй тупӑр та пулнӑ предложение сӑмахпа каласа парӑр.

Шӑнкӑрч... Хӗвел... Ҫумӑр... Аслати... Ҫиҫӗм... Тӑри... Пулӑ... Кӗтӳ... Ҫырма... Панулми... Ҫерҫи... Пулемёт... Тупӑ... Самолёт...

***55-мӗш хӑнӑхтару.*** Ҫак предложенисене ҫырса илӗр Подлежащине пӗр йӗрпе, сказуемӑйне икӗ йӗрпе аялтан туртӑр.

## Кӗркунне.

Ҫу иртрӗ. Кӗр ҫитрӗ. Кун кӗскелчӗ. Ҫӗр вӑрӑмланчӗ. Хирсем ҫаралчӗҫ. Авӑн пӗтнӗ. Ҫумӑр ҫӑвать. Вӑрман саралчӗ. Ҫулҫӑсем тӑкӑнаҫҫӗ. Тӑм ӳккелет. Ачасем вӗренеҫҫӗ.

***56-мӗш хӑнӑхтару.*** Кашни картинка ҫинчен пӗрер предложени туса ҫырӑр. Подлежащисене пӗр йӗрпе, сказуемӑйсене икӗ йӗрпе аялтан туртӑр.



***57-мӗш хӑнӑхтару.*** Ҫак сӑвва вуласа тухӑр. Саввӑн кашни пайӗнче миҫе предложени? Кашни пайне уйрӑм ят парӑр.

## Çулталăк вăхăчĕсем.

1. Юр ирĕлет.
Çĕр кĕскелет.
Шăнкăрч юрлать.
Курăк шăтать.
2. Хĕвел пĕçертет.
Çĕр çырли пиçет.
Çăка çурăлать.
Тулă пулать.

3. Кун кĕскелет.
Çĕр нӳрленет.
Шăнкăрчсем кайнă.
Хирсем çаралнă.
4. Хĕвел ăшăтмасть.
Курăк курăнмасть.
Хир шап-шурах.
Тăман ахăрать.

***58-мĕш хăнăхтару.*** Предложенисене çырса илĕр. Подлежащие е сказуемăя ăнлантарса паракан сăмахсене аялтан йĕр туртса тухăр.

Эпир хамăрăн тăван çĕршыва юрататпăр. Пирĕн çĕршывра ĕçхалăхĕ телейлĕ пурăнать. Колхозсенче тырă ăнса пулать. Çулсерен çĕнĕ заводсем хутшăнаççĕ. Çĕнĕ шкулсем уçăлаççĕ. Халĕ ялсенче те электростанцисем пур.

Пирĕн çĕршыва коммунистсен партийĕ ертсе пырать. Пирĕн çĕршыва Сталин ертсе пырать. Пирĕн çĕршыва тăшмансенчен Совет Çарĕ сыхлать.

Предложенире подлежащипе сказуемăйсăр пуçне урăх сăмахсем те пулаççĕ. Вĕсем хăшĕ подлежащие, хăшĕ сказуемăя ăнлантарса параççĕ. Çавăн пек ăнлантару сăмахĕсене **кĕçĕн членсем** теççĕ.

***59-мĕш хăнăхтару.*** Ыйтусем вырăнне кĕçĕн членсем кĕртсе, предложенисем туса çырăр.

## Пулă тытни.

Ачасем (*ăçта*?) кайрĕç. Вĕсем (*мĕн*?) илсе кайрĕç. (*Мĕнле*?) пулăсем (*ăçта*?) ишсе çӳреççĕ. Ачасем (*мĕн*?) шыраççĕ. Пулăсем (*мĕне*?) çакланаççĕ. Петĕр (*мĕн*?) туртса кăларчĕ. (*Мĕнле*?) пулă (*ăçтан*?) вĕçерĕнсе кайрĕ.

Тĕслĕх: *Ачасем пулла кайрĕç.*

***60-мĕш хăнăхтару.*** Аялта панă предложенисене вуласа тухăр, кашни предложенире кĕçĕн членсене кăтартса парăр.

1. Иван кĕнеке вулать.
2. Анна çыру çырать.
3. Ачасем лайăх вулаççĕ.
4. Ачасем хитре çыраççĕ.
5. Хурçă трактор хирте кĕрлет.
6. Симĕс калча хăвăрт ÿсет.
7. Шурă хур шыврa ишет.
8. Ешĕл улăхра кĕтÿ çÿрет.

***61-мĕш хăнăхтару.*** Çак предложенисенчен, кĕçĕн членсем кĕртсе,-анлăрах предложенисем тăвăр та каласа парăр.

Хĕл çитрĕ. Хир шуралчĕ. Çул ÿкрĕ. Ачасем савăнаççĕ. Ачасем ярăнаççĕ. Çунашкасем вĕлтлетеççĕ. Конькисем чăкăртатаççĕ. Шавлани илтĕнет. Юрă янăрать.

***62-мĕш хăнăхтару.*** Скобкăри ыйтусем тăрăх кĕçĕн членсем тупса, предложенисем çырăр.

Т ĕ с л ĕ х: *Кĕтÿçĕ çулла хирте кĕтÿ кĕтет.*

Ачасем (*хăçан? ăçта? мĕнле?*)... выляççĕ.
Кĕтÿçĕ (*хăçан? ăçта? мĕн?*)... кĕтет.
Пулăçă (*хăçан? ăçта? мĕн?*)... тытнă.
Колхозниксем (*ăçта? хăçан? мĕн?*)... выраççĕ.
Учитель (*камсене? мĕн-мĕн тума?*)... вĕрентет.
Йывăçсем (*ăçта? мĕнле?*)... ÿсеççĕ.
Гудок (*хăçан? мĕнле?*)... кăшкăрать.

## 7 §. Пĕрйышши членлă предложенисем.

***63-мĕш хăнăхтару.*** Çак статьяна вуласа тухăр. Кашни предложенире подлежащисене тупăр. Шутласа тухăр: кашни предложенире миçе подлежащи?

Поезд тапранчĕ. Пĕчĕк ачасем, хĕрсем, ватă стариксем вагон чÿречисенчен пăхса пыраççĕ. Вагон чÿречи умĕнчен телефон юписем, çуртсем, йывăçсем вĕлтлетсе юлаççĕ. Ялсем, шывсем, вăрмансем тăра-тăра юлаççĕ.

*64-мӗш хӑнӑхтару.* Ҫак предложенисене ҫырса илӗр. Подлежащисене аялтан пӗр йӗр туртса паллӑ тӑвӑр.

1. Вӑрманта юман, хыр, чӑрӑш, хурӑн, ӑвӑс ӳсет. 2. Пахчара ҫӗрулми, кишӗр, ҫарӑк, хӑяр, помидор ӳсет. 3. Шывра пулӑсем, раксем, тӗрлӗ хуртсем пурӑнаҫҫӗ. 4. Хирте ыраш, тулӑ, пӑрҫа, урпа, сӗлӗ пулать. 5. Ҫуркунне хура кураксем, тӑрисем, шӑнкӑрчсем, чӗкеҫсем килеҫҫӗ.

Предложенире темиҫе **подлежащи** пулма пултарать. Ҫавӑн пек предложение вуланӑ чухне кашни подлежащи хыҫҫӑн пӗчӗк чарӑну пулать, ҫырура кашни подлежащи хыҫҫӑн запятой лартаҫҫӗ.

*65-мӗш хӑнӑхтару.* Предложенисене вуласа тухӑр, унтан ҫырса илӗр. Кашни предложенире подлежащисене тупса кӑтартӑр. Подлежащисем хушшине мӗнле чарӑну палли лартнине асӑрхӑр.

Вӑрмансем, хирсем тата улӑхсем симӗсленчӗҫ. Ӗнесем те, сурӑхсем те хирте ҫӳреҫҫӗ. Ачасем те, ваттисем те пӳртре лармаҫҫӗ. Арҫынсем, хӗрарӑмсем, ачасем хирте тата пахчасенче ӗҫлеҫҫӗ.

Темиҫе подлежащиллӗ предложенире юлашки подлежащи умӗнче **тата** е **та, те** тӑрать пулсан, ун умне запятой лартмаҫҫӗ. Анчах **та, те** кашни подлежащи хыҫҫӑн тӑрать пулсан, подлежащисем хушшине запятойсем лартаҫҫӗ.

*66-мӗш хӑнӑхтару.* Ҫак предложенисене ҫырса илӗр, кирлӗ ҫӗре запятой лартӑр.

1. Петюк Ванюк Энтри вӑрмана кайрӗҫ. Вӑрманта мӑйӑр тата кӑмпа нумай. Унта чечексем те ҫырласем те пур.

2. Колхоз кӗлечӗсенче тулӑ ыраш сӗлӗ пӑри пӑрҫа та пур. Колхозӑн хирте тихасем пӑрусем путексем ҫӳреҫҫӗ. Кайӑк-кӗшӗк ферминче чӑхсем те кӑвакалсем те хурсем те пур.

*67-мĕш хăнăхтару.* Çак предложенисенче сказуемăйсене кăтартăр. Сказуемăйсем хушшине мĕнле паллăсем лартнă?

1. Ĕне курăк çиет те сĕт парать. Лаша суха сухалать, сӳре сӳрелет, кĕлте турттарать.

2. Шкул ачисем çыраççĕ, вулаççĕ, шутлаççĕ.

3. Машинăпах тырпула выраççĕ те çапаççĕ. Ушкăн-ушкăн хĕрĕсем ĕçлеççĕ те юрлаççĕ.

4. Колхозниксем выраççĕ тата авăн çапаççĕ.

5. Комбайн вырать те, çапать те, сăвăрать те.

> Предложенире темиçе сказуемăй пулма пултарать, çавăн пек предложение вулана чухне кашни сказуемăй хыççăн пĕчĕк чарăну пулать, çырура кашни сказуемăй хыççăн запятой лартаççĕ.

Юлашки сказуемăй умĕнче **тата** е **та, те, е** тăрать пулсан, ун умне запятой лартмаççĕ. Анчах **та, те** татăк кашни сказуемăй хыççăн тăрать пулсан, сказуемăйсем хушшине запятойсем лартаççĕ.

*68-мĕш хăнăхтару.* Çак предложенисене çырса илĕр. Сказуемăйсене аялтан йĕр туртса паллă тăвăр.

Эпир ĕнер вечера кайрăмăр. Вечерта эпир юрларăмăр, ташларăмăр, вылярăмăр. Аслă классенче вĕренекенсем спектакль лартрĕç,. музыка каларĕç, физкультура вăййисем турĕç.

*69-мĕш хăнăхтару.* Çак сăвва çырса илĕр. Кирлĕ çĕре запятойсем лартăр.

* * *

Силленет шавлать саралнă вăрман.
Сулăнать кашлать авалхи юман.
Ват юман кӳрши—çатрака çăка
çаралчĕ ĕнтĕ, кайрĕ ыйăха.
Пĕр ват хыр анчах, хулăм тăрлăскер,
тайăлмасть сикмест тумтирне хывмасть
кĕртен хăраса ăна пуççапмасть.

*70-мӗш хӑнӑхтару.* Ҫак предложенисенче пӗрйышши кӗҫӗн членсене паллӑ тӑвӑр. Кӗҫӗн членсем хушшине мӗнле паллӑ лартнӑ?

1. Улӑхра шурӑ, сарӑ, хӗрлӗ чечексем ӳсеҫҫӗ. 2. Вӗҫен кайӑксем вӑрманта та, хирте те, ялта та пурӑнаҫҫӗ. 3. Хӗлле хире, улӑха, ҫырмасене шурӑ юр витет. 4. Пирӗн йытӑ мулкача та, тилле те тытать. 5. Эпир пахчана ҫарӑк, кишӗр тата хӑяр акрӑмӑр.

Предложенире темиҫе пӗрйышши кӗҫӗн член пулма пултарать. Вуланӑ чухне кашни пӗрйышши кӗҫӗн член хыҫҫӑн пӗчӗк чарӑну пулать, ҫырура пӗрйышши кӗҫӗн членсем хушшине запятойсем лартаҫҫӗ.

Юлашки кӗҫӗн член умӗнче **тата** е **та, те** тӑрать пулсан, ун умне запятой лартмаҫҫӗ.

**Та, те** кашни кӗҫӗн член хыҫҫӑн тӑрать пулсан, кӗҫӗн членсем хушшине запятойсем лартаҫҫӗ.

*71-мӗш хӑнӑхтару.* Предложенисене ҫырса илӗр. Пӗрйышши членсем хушшине кирлӗ ҫӗре запятойсем лартӑр.

1. Эпӗ Шупашкара та Канаша та Ҫӗрпӗве те кайса курнӑ. 2. Эпӗ поездпа пароходпа автобуспа ҫӳресе курнӑ. 3. Пирӗн атте Варшавӑра Берлинра Прагӑра пулнӑ. Вӑл нимӗҫсене румынсене тата финсене хирӗҫ ҫапӑҫса курнӑ.

*72-мӗш хӑнӑхтару.* Ҫак предложенисене ҫырса илӗр. Кашни предложенире пӗрйышши членсене аялтан туртӑр, вӗсем мӗнле член пулнине калӑр. Кирлӗ ҫӗре запятой лартӑр.

Пирӗн хула ӳсет сарӑлать. Хулара ҫӗнӗ илемлӗ те пысӑк ҫуртсем нумайланчӗҫ. Хулара театр кино тата клубсем пур. Заводсем фабрикӑсем йышлӑланчӗҫ. Хулара вырӑссем те чӑвашсем те тутарсем те пурӑнаҫҫӗ.

Предложенире темиҫе подлежащи е темиҫе сказуемӑй, е темиҫе пӗрйышши кӗҫӗн член пулсан, ун пек предложение **пӗрйышши членлӑ** предложени теҫҫӗ.

Пӗрйышши членсем мӗне те пулин шутласа тухнине кӑтартаҫҫӗ.

*73-мĕш хăнăхтару.* Çак предложенисенче многоточи вырăнне хăвăр сăмахсем тупса çырса парăр. Кирлĕ çĕре запятойсем лартăр.

Мана атте тетрадь ручка... илсе пачĕ. Анне кĕпе... çĕлесе пачĕ. Аппа мана картинăллă кĕнеке хут ... пачĕ. Атте анне... мана юратаççĕ. Эпĕ аттене аннене... тĕрлĕ ĕçсенче пулăшатăп.

*74-мĕш хăнăхтару.* Çак сăвăри предложенисенче пĕрйышши членсене кăтартăр, вĕсем мĕнле член пулнине каласа парăр.

Айта, Ванюк, урама,
унта сана кĕтеççĕ.
Петя, Анна, Хĕвекла
вылямашкăн чĕнеççĕ.

Çемçе юра кустарса,
юр кĕлетки тăвăпăр.
Алла-аллăн тытăнса,
выльăпăр та кулăпăр.

*75-мĕш хăнăхтару.* 74-мĕш хăнăхтаруri пекех тăвăр.

Пирĕн колхоз электростанци, армансем, клуб, пысăк мунча лартнă. Колхоз хирĕнче тулă та, ыраш та, пăрçа та, сĕлĕ те лайăх пулать. Лашасем, ĕнесем, сурăхсем, сыснасем тутă çӳреççĕ.

Колхоз ачасем валли ясли тата ача сачĕ уçнă.

## 8 §. Япала ячĕсем.

*76-мĕш хăнăхтару.* Предложенисене çырса илĕр. ***Кам?*** е ***мĕн? камсем?*** е ***мĕнсем?*** ыйтупа ыйтăнакан сăмахсене аялтан йĕр туртса паллă тăвăр.

Павăл кĕнеке вулать. Маня çырать. Эпĕ задача шутлатăп. Анне мана пулăшать. Атте хаçат вулать. Пĕчĕк ачасем выляççĕ. Вĕсене пуканесем илсе панă.

*Павăл, Маня, анне, атте* сăмахсем ***кам?*** ыйтупа ыйтăнаççĕ.

*Ачасем* сăмах ***камсем?*** ыйтупа ыйтăнать.

*Пуканесем* сăмах ***мĕнсем?*** ыйтупа ыйтăнать.

*Кĕнеке, задача, хаçат* сăмахсем ***мĕн?*** ыйтупа ыйтăнаççĕ.

Çак сăмахсем пурте тĕрлĕ **япаласен ятне** пĕлтереççĕ.

***77-мĕш хăнăхтару.*** Предложенисене çырса илĕр. ***Кам? мĕн?*** ыйтусем выранне кирлĕ сăмахсене кĕртсе çырăр.

Пурана (*кам?*) пурать.
Тимĕре (*кам?*) шаккать.
Пулла (*кам?*) тытать.
Кĕрĕке (*кам?*) çĕлет.

Тырра (*камсем?*) выраççĕ.
Кĕлтене (*камсем?*) çыхаççĕ.
Шкулта (*камсем?*) вĕренеççĕ.
Тырра (*камсем?*) хуралласçĕ.

***78-мĕш хăнăхтару.*** а) Килти сават-сапа ячĕсене, сĕтел-пукан ячĕсене çырăр. б) Выльăх-чĕрлĕхсен, тискер кайăксен, вĕçен кайăксен ячĕсене çырăр.

***79-мĕш хăнăхтару.*** Хăвăр пĕлекен ултă ял тата ултă хула ятне çырса хурăр. Кашни ял, хула ятне пысăк саспаллипе пуçласа çырăр.

Тĕслĕх: *Етĕрне хули, Тивĕш ялĕ.*

***80-мĕш хăнăхтару.*** Хăвăр пĕлекен юханшывсен ячĕсене çырăр. Кашни юханшывăн ятне пысăк саспаллипе пуçласа çырăр.

Тĕслĕх: *Пăла шывĕ, Сăрă шывĕ.*

***81-мĕш хăнăхтару.*** Хăвăр пĕлекен колхозсен ячĕсене çырăр. Кашни колхоз ятне пысăк саспаллипе пуçласа çырăр.

Тĕслĕх: *„Самолёт" колхоз, „Трактор" колхоз.*

***82-мĕш хăнăхтару.*** „Çумăр хыççăн" ятлă сăвăран çут-çанталăкри пулăмсене пĕлтерекен сăмахсене çырса илĕр.

## Çумăр хыççăн.

Акă тăвăл чарăнать,
аслати те йăвашрах.
Вăйлă çумăр тек çумасть—
уя тухас хăвăртрах.
Ытла аван, пит тӳлек
çумăр хыççăн улăхра.

Хаяр тăвăл пулман пек,
аслати те аякра.
Пĕлĕт хĕрри уçăлать,
çиçĕм çурмасть сывлăша.
Пăх, асамат кĕперĕ—
мĕн пур ун пек чиперри?

Çынсене, чĕрчунсене, тĕрлĕ хатĕрсене, çĕр-шыври пулăмсене грамматикăра пурне те **япала** теççĕ.

Тĕрлĕ япаласен ятне пĕлтерекен сăмахсене **япала ячĕсем** теççĕ.

*83-мĕш хăнăхтару.* „Ака çинче“ ятлă сăвăран этеме пĕлтерекен сăмахсене тата чĕрчунсемпе чĕрĕ мар япаласене пĕлтерекен сăмахсене çырса илĕр.

### Ака çинче.

Вăшăлтатать ăшă çил—
юлашки юр ирĕлет.
Хĕвел панă çĕнĕ пил
çĕре-шыва чун кĕртет.
Ватă йăмра сарăлса
урам туллин ешерет.
Вĕлле хурчĕ, пыл пухса,
ун тăрринче сĕрлешет.

Таса уйра—ял тавра,
этем сасси ĕрлешет,
халăх унта акара
тырă акать, сÿрелет.
Симĕс вăрман хушшинчен
куккук сасси илтĕнет.
Çерем çинче, улăхра,
путек сурăх сиккелет.

*84-мĕш хăнăхтару.* Асăрхăр: хăçан *кам?* тесе, хăçан *мĕн* тесе ыйтаççĕ?

Кам калаçать?—Çын. Кампа вылятăн?—Яккупа.
Мĕн авăтать?—Автан. Мĕнпе вылятăн?—Пÿскепе.

Этеме пĕлтерекен япала ячĕсене *кам*? *камăн*? *кама*? *кампа*? *камра*? *камран*? тесе ыйту параççĕ, ытти япала ячĕсене *мĕн*? *мĕнĕн*? *мĕне*? *мĕнпе*? *мĕнре*? *мĕнрен*? тесе ыйту параççĕ.

## 9 §. Япала ячĕсен хисепĕсем.


кишĕр


кишĕрсем


кролик


кроликсем


кăвакарчăн


кăвакарчăнсем


чăх


чăхсем

Япала ячĕсем икĕ хисепре пулма пултараççĕ: пĕрреллĕ хисепре тата нумайлă хисепре пулаççĕ.

Пĕрреллĕ хисеп япала пĕрре анчах пулнине е япаласен пĕр пĕтĕм ушкăнне пĕлтерет: лаша, урапа, пÿрт, юлташ, ял, халăх.

Нумайлă хисеп икĕ япалана е япаласем нумайййине пĕлтерет: лашасем, урапасем, пӳртсем, юлташсем, ялсем, хуласем.

Нумайлă хисеп сăмах тĕпĕ çумне-*сем* аффикс хушăннипе пулать.

***85-мĕш хăнăхтару.*** Çакăнта панă сăмахсенчен малтан япала пĕрре анчах пулнине пĕлтерекен сăмахсене, кайран япаласем нумайййне пĕлтерекен сăмахсене çырса илĕр.

Пӳртсем, хăяр, капансем, сурăх, ĕне, качакасем, хурăн, чăрăш, йăмрасем, ачасем, вăрман, пĕве, тырăсем, шывсем.

***86-мĕш хăнăхтару.*** „Тăри юрри" ятлă сăвăран нумайлă хисепри япала ячĕсене çырса илĕр.

## Тăри юрри.

Çак çĕршыва аса илтĕм,
хăвăрт вĕçсе эп килтĕм;
пин çухрăмсем ярăнтăм,
тем те курса савăнтăм.

Ялсем, шывсем, вăрмансем
тăра-тăра юлчĕçĕ;
чĕрĕлекен хир-уйсем
мана курса кулчĕçĕ.

Ушкăн-ушкăн арçынсем
акаççĕ те сӳреççĕ,
хĕрарăмсем, ачасем
пахчасенче ĕçлеççĕ.

Манăн çăмăл юррăмсем
янтра-янтра юлчĕçĕ.
Ăна илтсе, çыннисем
савăнăçпа тулчĕçĕ.

***87-мĕш хăнăхтару.*** Çак япала ячĕсене нумайлă хисепре туса çырăр. Нумайлă хисепри япала ячĕсен аффиксĕсене аялтан йĕр туртса паллă тăвăр.

| | |
|---|---|
| Ача — ачасем. | куккукăн—куккуксен(ĕн) |
| калча — ... | куракăн — ... |
| кĕлте — ... | автанăн — ... |
| вĕлле — ... | мулкачăн — ... |
| турат — ... | чавкан(ăн)—чавкасен(ĕн) |
| кĕтӳ — ... | путенен— ... |
| тăри — ... | çырман(ăн)— ... |
| урай — ... | сарайăн — ... |

*88-мĕш хăнăхтару.* Çак предложенисене, паллă тунă япала ячĕсене нумайлă хисепре туса, улăштарса çырса илĕр.

1. Пирĕн ялта **йывăç** нумай.
2. Çулла, вăрманта çӳренĕ чухне, **выльăх** мăнтăр.
3. Колхоз пахчинче **çимĕç** йышлă.
4. Вĕренекенĕн, **рабочи** пекех, ĕçе вăхăтра тытăнмалла.
5. Колхоз **вăрлăха** тасатса хатĕрлерĕ.
6. Совет Союзĕнче тĕрлĕ халăх пурăнать: **вырăс, тутар, чăваш, мари** тата ыттисем те.

## 10 §. Япала ячĕсен падежĕсем.

*89-мĕш хăнăхтару.* Çак статьяран паллă тунă **ял** сăмаха пур предложенисенчен те çырса илĕр, сăмахĕсене пĕр-пĕрин айне туса çырăр. Кашни сăмахпа юнашар скобкăра унăн ыйтăвне лартăр.

Тĕслĕх: *ял* (*мĕн?*)

### Пирĕн ял.

Пирĕн **ял** вăрман хĕрринче ларать. **Ялăн** урамĕсем тӳп-тӳрĕ, илемлĕ. **Яла** кĕнĕ çĕртех шкул ларать. **Ялпа** юнашар пĕчĕк шыв юхса выртать. **Ялта** йывăç пахчисем нумай. **Ялтан** инçе мар чугун çул станцийĕ пур.

| | | |
|---|---|---|
| 1. **Кам** вĕренет? | *йăмăк* | *ача* |
| 1. **Мĕн** ӳсет? | *хурăн* | *çăка* |
| 2. **Камăн** кĕнеке пур? | *йăмăк-ăн* | *ача-н(ăн)* |
| 2. **Мĕнĕн** çулçă пур? | *хурăн-ăн* | *çăка-н(ăн)* |
| 3. **Кама** тетрадь панă? | *йăмăк-а* | *ача-на* |
| 3. **Мĕне** çумăр кирлĕ? | *хурăн-а* | *çăка-на* |
| 4. **Кама** куртăн? | *йăмăк-а* | *ача-на* |
| 4. **Мĕн** куртăн? | *хурăн* | *çăка* |
| 5. **Кампа** лартăн? | *йăмăк-па* | *ача-па* |
| 5. **Мĕнпе** савăнатăн? | *хурăн-па* | *çăка-па* |
| 6. **Камра** линейка? | *йăмăк-ра* | *ача-ра* |
| 6. **Мĕнре** (ăçта) сухăр çук? | *хурăн-та* | *çăка-ра* |
| 7. **Камран** хут илтĕн? | *йăмăк-ран* | *ача-ран* |
| 7. **Мĕнрен** арча турăн? | *хурăн-тан* | *çăка-ран* |

Япала ячĕсем *кам? мĕн? камăн? мĕнĕн? кама? мĕне? мĕн? кампа? мĕнпе? камра? мĕнре? ăçта? камран? мĕнрен? ăçтан?* ыйтусем тăрăх улшăнаççĕ.

Япала ячĕсен çакăнта кăтартнă ыйтусенчен килекен кашни формине **падеж** теççĕ.

Япала ячĕсем падежсем тăрăх улшăннине **вĕçленни** теççĕ.

Падежсем çиччĕ:

1. **Ят падежĕ,** унăн ыйтăвĕсем *кам? мĕн?*
2. **Камăнлăх падежĕ,** „ *камăн? мĕнĕн?*
3. **Пару падежĕ,** „ *кама? мĕне? ăçта?*
4. **Тăву падежĕ,** „ *кама? мĕне? мĕн?*
5. **Пĕрлелĕх падежĕ,** „ *кампа? мĕнпе?*
6. **Вырăн падежĕ,** „ *камра? мĕнре? ăçта?*
7. **Туху падежĕ,** „ *камран? мĕнрен? ăçтан?*

***90-мĕш хăнăхтару.*** Çак предложенисене вуласа тухăр, кашни предложенире **юр** сăмахăн падежне тата унăн ыйтăвне кăтартса парăр.

Шур **юр** çăвать те çăвать. Пĕтĕм хир **юрпа** витĕнчĕ. Эпир шкула утатпăр. **Юрăн** çемçе пĕрчисем пирĕн тумтир çине лараççĕ. Шкула çитрĕмĕр. Тумтир çинчи **юра** силлерĕмĕр. Шкултан тавăрăнсан, эпир **юртан** кĕлетке тумалла вылярăмăр.

***91-мĕш хăнăхтару.*** Çакăнта кăтартнă сăмахсемпе предложенисем тăвăр. Пулнă предложенисене çырса хурăр. Кăтартнă сăмахăн кашни форми çине падеж ятне, ыйтăвне çырса хурăр.

Вырăн п., ăçта?

Тĕслĕх: *Ачасем шкулта вĕренеççĕ.*

| | |
|---|---|
| шкула | çырма |
| шкулта | çырмара |
| шкул | çырмана |
| шкултан | çырмаран |
| шкулпа | çырмапа |
| шкулăн | çырман |

## 11 §. Хупă сасăпа пĕтекен япала ячĕсем вĕçленни.

Вĕçленĕвĕн тĕслĕхĕсем.

Пĕррелле хисеп.

| | | |
|---|---|---|
| Ят. Кам? | *юлташ* | *пĕлĕш* |
| К. Каман? | *юлташăн* | *пĕлĕшĕн* |
| П. Кама панă? | *юлташа* | *пĕлĕше* |
| Т. Кама куртăн? | *юлташа* | *пĕлĕше* |
| Пĕр. Кампа? | *юлташпа* | *пĕлĕшпе* |
| В. Камра? | *юлташра* | *пĕлĕшре* |
| Тух. Камран? | *юлташран* | *пĕлĕшрен* |

Нумайлă хисеп.

| | | |
|---|---|---|
| Ят. Камсем? | *юлташсем* | *пĕлĕшсем* |
| К. Камсен (ĕн)? | *юлташсен(ĕн)* | *пĕлĕшсен(ĕн)* |
| П. Камсене преми панă?, | *юлташсене* | *пĕлĕшсене* |
| Т. Камсене куртăн? | *юлташсене* | *пĕлĕшсене* |
| Пĕр. Камсемпе? | *юлташсемпе* | *пĕлĕшсемпе* |
| В. Камсенче? | *юлташсенче* | *пĕлĕшсенче* |
| Тух. Камсенчен? | *юлташсенчен* | *пĕлĕшсенчен* |

***Л*, *н*, *р*, *ль, нь, рь*** саспаллисемпе пĕтекен сăмахсем вырăн падежĕпе туху падежĕнче ***ра*, *ре*, *ран*, *рен*** аффикссем вырăнне ***та*, *те*, *тан*, *тен*** аффикссене йышăнаççĕ.

| | | | |
|---|---|---|---|
| Ят. Мĕн ӳсет? | *йывăç* | *кишĕр* | *палан* |
| К. Мĕнĕн турачĕ? | *йывăçăн* | *кишĕрĕн* | *паланăн* |
| П. Мĕне ăшă кирлĕ? | *йывăça* | *кишĕре* | *палана* |
| Т. Мĕн(е) курнă? | *йывăç(а)* | *кишĕр(е)* | *палан(а)* |
| Пĕр. Мĕнпе? | *йывăçпа* | *кишĕрпе* | *паланпа* |
| В. Мĕнре? | *йывăçра* | *кишĕрте* | *паланта* |
| Тух. Мĕнрен? | *йывăçран* | *кишĕртен* | *палантан* |

Хытă сăмахсен падеж аффиксĕсем те хытă пулаççĕ. Çемçе сăмахсен падеж аффиксĕсем те çемçе пулаççĕ.

| | | |
|---|---|---|
| Ят. *çeçпĕл* | *хурлăхан* | *хăяр* |
| К. *çeçпĕл-**ĕн*** | *хурлăхан-**ăн*** | *хăяр-**ăн*** |
| П. *çeçпĕл-**е*** | *хурлăхан-**а*** | *хăяр-**а*** |
| Т. *çeçпĕл(**е**)* | *хурлăхан(**а**)* | *хăяр(**а**)* |
| Пĕр. *çeçпĕл-**пе*** | *хурлăхан-**па*** | *хăяр-**па*** |
| В. *çeçпĕл-**те*** | *хурлăхан-**та*** | *хăяр-**та*** |
| Тух. *çeçпĕл-**тен*** | *хурлăхан-**тан*** | *хăяр-**тан*** |

| | | |
|---|---|---|
| Ят. Мĕнсем? | *йывăç**сем*** | *çĕмел**сем*** |
| К. Мĕнсен(ĕн) | *йывăç**сен(ĕн)*** | *çĕмел**сен(ĕн)*** |
| П. Мĕнсене? | *йывăç**сене*** | *çĕмел**сене*** |
| Т. Мĕнсем, мĕнсене? | *йывăç**сем(сене)*** | *çĕмел**сем(сене)*** |
| Пĕр. Мĕнсемпе? | *йывăç**семпе*** | *çĕмел**семпе*** |
| В. Мĕнсенче? | *йывăç**сенче*** | *çĕмел**сенче*** |
| Тух. Мĕнсенчен? | *йывăç**сенчен*** | *çĕмел**сенчен*** |

Япала ячĕсене нумайлă хисепре вĕçленĕ чухне сăмах тĕпĕ çумне малтан ***сем*** аффикс, унтан падеж аффиксĕ хушăнать.

Каманлăх, пару, тăву, выран, туху падежĕсенче ***сем*** аффикс выранне ***сен*** аффикс пулать.

Нумайлă хисепĕн падеж аффиксĕсем пур сăмахсен те пĕр пекех çемçе пулаççĕ.

***92-мĕш хăнăхтару.*** Тĕслĕхсене пăхса, çак япала ячĕсене вĕçлесе тухăр:

арман, йĕлтĕр, тумтир, сехет, курăк, пÿлĕм.

***93-мĕш хăнăхтару.*** Çак статьяна çырса илĕр. Точкăсем выранне кирлĕ падеж аффиксĕсене çырăр.

## Кĕрĕк.

Манăн кĕрĕк çĕнĕ. Кĕрĕк ... мана кăçал çĕлетсе пачĕç. Кĕрĕк ... çухине путек тирĕнчен туса пачĕç. Халĕ эпĕ шкула кĕрĕк ... çÿретĕп. Кĕрĕк ... эпĕ тирпейлĕ тытатăп: йĕпетместĕп, вараламастăп. Шкула çитсен, кĕрĕк ... хывса çакатăп.

## 12 §. *А, е* уçă сасăсемпе пĕтекен япала ячĕсем вĕçленни.

Вĕçленĕвĕн тĕслĕхĕсем.

| | |
|---|---|
| Ят. *арча* | *кĕпе* |
| К. *арча-н* (*ăн*) | *кĕпе-н* (*ĕн*) |
| П. *арча-на* | *кĕпе-не* |
| Т. *арча*(*на*) | *кĕпе*(*не*) |
| Пĕр. *арча-па* | *кĕпе-пе* |
| В. *арча-ра* | *кĕпе-ре* |
| Тух. *арча-ран* | *кĕпе-рен* |

*А, е* уçă сасăсемпе пĕтекен япала ячĕсем камăнлăх падежĕнче ***н* (*ăн*), *н* (*ĕн*)** аффикссем, пару падежĕнче (хăш чухне тăву падежĕнче те) ***на*, *не*** аффикссем йышăнаççĕ.

***94-мĕш хăнăхтару.*** Тĕслĕхсене пахса, çак япала ячĕсене вĕçлесе тухăр:

çава, эрне, юпа, вĕрене.

***95-мĕш хăнăхтару.*** Çак статьяна çырса илĕр. Точкăсем вырăнне кирлĕ падеж аффиксĕсене çырăр.

### Купăста.

Купăста—питĕ усăллă çимĕç. Купăста... этеме кирлĕ япаласем нумай. Пахчара эпир çулсеренех купăста лартса ÿстеретпĕр. Купăста... шăварса тăратпăр, купалатпăр. Купăста... тăварласа та, тăварламасăр яшка çине ярса пĕçерсе те çиетпĕр. Тÿнĕ купăста... кукăль тăватпăр.

***96-мĕш хăнăхтару.*** Кĕрпе сăмаха тĕрлĕ падежра лартса, предложенисем тăвăр.

## 13 §. *У, ӳ* уҫӑ сасӑсемпе пӗтекен япала ячӗсем вӗҫленни.

Вӗҫленӗвӗн тӗслӗхӗсем.

| | |
|---|---|
| Ят. *ӑмӑрту* | *вӗренӳ* |
| К. *ӑмӑртӑв-ӑн* | *вӗренӗв-ӗн* |
| П. *ӑмӑртӑв-а* | *вӗренӗв-е* |
| Т. *ӑмӑрту(ӑв-а)* | *вӗренӳ(ӗв-е)* |
| Пӗр. *ӑмӑрту-па* | *вӗренӳ-пе* |
| В. *ӑмӑрту-ра* | *вӗренӳ-ре* |
| Тух. *ӑмӑрту-ран* | *вӗренӳ-рен* |

*У, ӳ* уҫӑ сасӑсемпе пӗтекен япала ячӗсен камӑнлӑх падежӗнче тата пару, тӑву падежӗсенче вӗҫӗнчи *у, ӳ* сасӑсем выранне *ӑв, ӗв* пулать.

***97-мӗш хӑнӑхтару.*** Вӗҫленӗвӗн тӗслӗхӗсене пӑхса, ҫак япала ячӗсене вӗҫлесе тухӑр:

ҫыру, чӗнӳ, ҫыхӑну, ҫӗнтерӳ, ӑру, пӗлӳ.

***98-мӗш хӑнӑхтару.*** Ҫак статьяна ҫырса илӗр. Точкасем выранне, пуху сӑмах ҫумне, кирлӗ падеж аффиксӗсене ҫырӑр.

Пуху.

Паян колхоз пуху... пулчӗ. Пуху... ҫын нумай пуҫтарӑнчӗ. Пуху председательне Иванов юлташа суйларӗҫ. Пуху... ҫуракине хатӗрленесси ҫинчен сӳтсе-яврӗҫ. Пуху... тухсан, ҫынсем кино курма кайрӗҫ.

## 14 §. *Ӑ, ӗ* уҫӑ сасӑсемпе пӗтекен япала ячӗсем вӗҫленни.

Вӗҫленӗвӗн тӗслӗхӗсем.

Пӗрреллӗ хисеп.

| | | |
|---|---|---|
| Ят. *пулӑ* | *кӗвӗ* | *хурҫӑ* |
| К. *пулл-ӑн* | *кӗвв-ӗн* | *хурҫ-ӑн* |
| П. *пулл-а* | *кӗвв-е* | *хурҫ-а* |

| | | |
|---|---|---|
| Т. *пулă*(*пулл-а*) | *кĕвĕ*(*кĕвв-е*) | *хурçă* (*хурç-а* |
| Пĕр. *пулă-па* | *кĕвĕ-пе* | *хурçă-па* |
| В. *пулă-ра* | *кĕвĕ-ре* | *хурçă-ра* |
| Тух. *пулă-ран* | *кĕвĕ-рен* | *хурçă-ран* |

Нумайлă хисеп.

| | | |
|---|---|---|
| Ят. *пулă-сем* | *кĕвĕ-сем* | *хурçă-сем* |
| К. *пулă-сен-ĕн* | *кĕвĕ-сен-ĕн* | *хурçă-сен-ĕн* |
| П. *пулă-сен-е* | *кĕвĕ-сен-е* | *хурçă-сен-е* |
| Т. *пулă-сем*(*сене*) | *кĕвĕ-сем*(*сене*) | *хурçă-сем*(*сене*) |
| Пĕр. *пулă-сем-пе* | *кĕвĕ-сем-пе* | *хурçă-сем-пе* |
| В. *пулă-сен-че* | *кĕвĕ-сен-че* | *хурçă-сен-че* |
| Тух. *пулă-сен-чен* | *кĕвĕ-сен-чен* | *хурçă-сен-чен* |

*Ă*, *ĕ* уçă сасăсемпе пĕтекен аффикссăр япала ячĕсен *ă*, *ĕ* умĕнче пĕр хупă сасă анчах тăрать пулсан, çав хупă сасă камăнлăх падежĕнче тата пару, тăву падежĕсенче пĕрреллĕ хисепре вăрăмланать; нумайлă хисепре вăрăмланмасть; *ă*, *ĕ* умĕнче икĕ хупă сасă тăрать пулсан, хупă сасăсем пĕрреллĕ хисепре вăрăмланмаççĕ.

*99-мĕш хăнăхтару.* Веçленĕвĕн теслĕхĕсене пăхса, çак япала ячĕсене вĕçлесе тухăр:

алă, сăвă, тилĕ, сĕлĕ, хуралçă, пуртă, пĕкĕ, тупă.

*100-мĕш хăнăхтару.* Çак статьяна çырса илĕр. **Тулă** сăмах çумне кирлĕ падеж аффиксĕсене çырăр. Камăнлăх тата пару, тăву падежĕсенче *л* сасса вăрăмлатса çырăр.

## Тулă.

Революциччен пирĕн енче тулă... акманпа пĕрех. Пирĕн енче тулă пулмасть тесе шухăшланă. Колхозсем организациленĕ хыççăн тулă... ытларах та ытларах ака пуçларĕç. Тулă питĕ паха тырă. Тулă... çăнăх та кĕрпе те пулать.

*101-мĕш хăнăхтару.* **Кÿлĕ** ятлă статьяна çырса илĕр. **Кÿлĕ** сăмах çумне кирлĕ падеж аффиксĕсене лартса пырăр. Камăнлăх тата пару, тăву падежĕсенче *л* сасса вăрăмлатса çырăр.

### Кӳлӗ.

Пирӗн колхоз ҫӗр чавса пысӑк кӳлӗ тунӑ. Кӳлӗ ... тӗрлӗ пулӑсем янӑ. Ҫуллахи хӗвеллӗ кунсенче кӳлӗ ... пулӑсем выляни курӑнать. Кӳлӗ ... тӗпӗ хӑйӑрлӑ. Эпир ҫулла час-часах кӳлӗ ... шыва кӗретпӗр. Шӑрӑх кунсенче кӳлӗ ... тухас та килмест. Хӗлле кӳлӗ шӑнать. Вара эпир кӳлӗ ... пӑрӗ ҫине конькипе ярӑнма ҫӳретпӗр.

***102-мӗш хӑнӑхтару.*** 101-мӗш хӑнахтару пекех тавӑр. **Вӑрҫӑ** сӑмахра ***ӑ*** сасӑ умӗнче икӗ хупӑ сасӑ тӑрать, ҫавӑнпа вӗсем вӑрӑмланмаҫҫӗ.

### Отечественнӑй Аслӑ вӑрҫӑ.

1941-мӗш ҫулта нимӗҫ фашисчӗсем пирӗн Тӑван ҫӗр-шыва вӑрҫӑ... килсе тапӑнчӗҫ. Пӗтӗм совет халӑхӗ тӑшмансене хирӗҫ Отечественнӑй Аслӑ вӑрҫӑ... кар тӑчӗ. Ҫав вӑрҫӑ... совет халӑхӗн ывӑлӗ-хӗрӗсем калама ҫук пысӑк паттӑрлӑх кӑтартрӗҫ. Отечественнӑй Аслӑ вӑрҫӑ... эпир пысӑк ҫӗнтерӳсем туса тухрӑмӑр. Вӑрҫӑ... тӑваттӑмӗш ҫулӗ пӗтнӗ ҫӗре тӑшмана тӗппипех пӗтерсе тӑкрӑмӑр.

***103-мӗш хӑнӑхатру.*** **Пулӑҫӑ, кӗтӳҫӗ** сӑмахсем мӗнле вӗҫленнине асӑрхӑр.

| | |
|---|---|
| Ят. *пулӑҫӑ* | *кӗтӳҫӗ* |
| К. *пулӑҫ-ӑн* | *кӗтӳҫ-ӗн* |
| П. *пулӑҫ-а* | *кӗтӳҫ-е* |
| Т. *пулӑҫ-а* | *кӗтӳҫ-е* |
| Пӗр. *пулӑҫӑ-па* | *кӗтӳҫӗ-пе* |
| В. *пулӑҫӑ-ра* | *кӗтӳҫӗ-ре* |
| Тух. *пулӑҫӑ-ран* | *кӗтӳҫӗ-рен* |

***Ӑ, ӗ*** уҫӑ сасӑсемпе пӗтекен **аффикслӑ** сӑмахсенче ***ӑ, ӗ*** умӗнче пӗр хупӑ сасӑ анчах тӑрать пулсан та, сӑмаха вӗҫленӗ чухне ҫав хупӑ сасӑ вӑрӑмланмасть.

## 15 §. *И* уҫӑ сасӑпа пӗтекен япала ячӗсем вӗҫленни.

| | | |
|---|---|---|
| Ят. Мӗн ӳсет? | *пӑри* | *тӑри* |
| К. Мӗнӗн? | *пӑри-**н**(**йӗн**)* | *тӑри-**н**(**йӗн**)* |
| П. Мӗне? | *пӑри-**е*** | *тӑри-**е*** |

| | | |
|---|---|---|
| Т. Мĕн(е)? | *пăри (е)* | *тăри(е)* |
| Пĕр. Мĕнпе? | *пăри-пе* | *тăри-пе* |
| В. Мĕнре (ăçта)? | *пăри-ре* | *тăри-ре* |
| Тух. Мĕнрен (ăçтан)? | *пăри-рен* | *тăри-рен* |

***И*** уçă сасăпа пĕтекен япала ячĕсем камăнлăх падежĕнче ***н*** е ***йĕн*** аффикс йышăнаççĕ, пару, тăву падежĕсенче ***е*** аффикс йышăнаççĕ. Аффикссем пур падежсенче те çемçе пулаççĕ (***и*** сасă çемçе уçă сасă пирки).

***104-мĕш хăнăхтару.*** **Пăри, тăри** сăмахсем мĕнле вĕçленнине пăхса, çак япала ячĕсене вĕçлесе тухăр:

Кĕркури, Варвари, çерçи, шăши.

***105-мĕш хăнăхтару.*** Çак статьяна вуласа тухăр. **Пăши** сăмах тĕрлĕ предложенисенче хăш падежра тăнине каласа парăр.

**Пăши.**

Вăрманта **пăши** çӳренĕ. **Пăшие** сунарçă курнă. **Пăши** те сунарçа сиснĕ. **Пăшийĕн** урисем çивчĕ. **Пăшие** вĕсем тискер кайăксенчен, этемрен тарса хăтăлма пулăшаççĕ. Сунарçă **пăширен** аякра та мар пулнă. Анчах, сунарçă пăшалне çĕклесе иличчен, **пăши** тапса сикнĕ те куçран çухалнă.

## 16 §. *Й* сасăпа пĕтекен япала ячĕсем вĕçленни.

| | |
|---|---|
| Ят. *сарай* | *телей* |
| К. *сарай-ăн* | *телей-ĕн* |
| П. *сара-я* | *теле-е* |
| Т. *сарай (сарая)* | *телей (телее)* |
| Пĕр. *сарай-па* | *телей-пе* |
| В. *сарай-ра* | *телей-ре* |
| Тух. *сарай-ран* | *телей-рен* |

***Й*** сасăпа пĕтекен сăмахсем пару, тăву падежĕсенче ***а***, ***е*** (***э***) аффикс йышăнаççĕ, ***й*** саспалли ку падежсенче ***а***, ***е*** (***э***), ***у*** сасăсемпе пĕрлешет; пĕрлешнĕ сасăсене ***я***, ***е***, ***ю*** саспаллисемпе кăтартаççĕ.

***106-мӗш хӑнӑхтару.*** **Сарай, телей** ячесем **менле** вӗҫленнине пӑхса, ҫак япала ячӗсене вӗҫлесе **тухӑр:**

какай, сӑрнай, вӑй, чей, туй, мӑй.

***107-мӗш хӑнӑхтару.*** Ҫак сӑвва вуласа тухӑр. **Уй сӑмах** кашни предложенире мӗнле падежра тӑнине, унӑн **ыйтӑвне** кӑтартса парӑр.

**Колхоз уйӗ.**

Уя тухрӑм, ай **уй** куртӑм,—
**уйӑн** вӗҫӗ-хӗрри те ҫук.
**Уйпа** утса эп савӑнтӑм,
тулли-сӗлли ай пулнӑ чух.
Йӑрансӑр **уй** ай куҫ тулли,
таҫта ҫити ай сарӑлать.
**Уйра** ылттӑн пек сар тулли
сар тинӗс пек ай хумханать.

***108-мӗш хӑнӑхтару.*** **Вӑй** сӑмаха тӗрле падежра **лартса** предложенисем тӑвӑр.

Тӗслӗх: Вӑя хурса ӗҫле.

***109-мӗш хӑнӑхтару.*** Ҫак предложенисенче паллӑ тунӑ сӑмахсем мӗнле падежра тӑнине тата **ыйтӑвне** кӑтартса парӑр.

1. Эп **хӑмаран** шӑнкӑрч йӑви турӑм.
2. **Ачасем** уйра **йӗлтӗрпе** ярӑнаҫҫӗ.
3. **Лаша колхоза** пысӑк усӑ парать.
4. **Трактор лашаран** темиҫе хут вӑйлӑрах.
5. Сортлӑ **тырӑ** пысӑк тухӑҫ парать.
6. **Радио** ҫӗнӗ хыпарсем пӗлтерет.
7. Пирӗн **ҫӗршывра ӗҫҫынни** телейлӗ пурӑнать.

## 17 §. Япала ячӗсем предложенире подлежащи е кӗҫӗн член пулни.

Япала ячӗсем предложенире **подлежащи** е **кӗҫӗн член** пулаҫҫӗ.

***110-мӗш хӑнӑхтару.*** Чертӗжсемпе кӑтартнӑ предложенисене пӑхса тухӑр. Кашни уйрӑм предложенире **хӗл сӑмах**

мĕнле член пулса тăрать? Пирвайхи предложенире мĕнле ыйтупа ыйтăнать? Иккĕмĕш предложенире?




*111-мĕш хăнăхтару*. а) Çак статьяна вуласа тухăр. **Завод** сăмах кашни предложенире мĕнле улшăннине асăрхăр.

**Завод** сăмах подлежащи пулса тăракан предложенисене çырса илĕр.

## Завод.

Пирĕн ял çывăхĕнче **завод** ларать. Вăл **завод** крахмал туса кăларать. **Заводра** ман пичче те ĕçлет. Эпĕ пичче патне **завода** темиçе те кайса курнă. **Заводăн** çурчĕсене электричество çутатать. **Заводăн** машинисем электричествăпа ĕçлеççĕ.

*112-мĕш хăнăхтару*. Çак статьяран **пахча** сăмах кĕçĕн член пулса тăракан предложенисене çырса илĕр.

## Пахча.

Пирĕн нысăк мар **пахча** пур. **Пахчан** усси питĕ пысăк. Çуркунне **пахчана** эпир тĕрлĕ çимĕçсем лартатпăр. Пирĕн **пахчара** арбуз та ӳсет. Кĕркунне **пахчаран** тĕрлĕ çимĕç хĕл каçмалăхах пухса илетпĕр.

*113-мĕш хăнăхтару*. Çак статьяна вуласа тухăр, **ĕç** сăмах хăш предложенире подлежащи, хăш предложенире кĕçĕн член пулнине кăтартса парăр.

## Ĕç.

Ĕлĕк **ĕç** çынна тарăхтарнă. Пирĕн **ĕçпе** ĕлĕк капиталистсемпе помещиксем пуйса пынă.

Халь ĕççыннине **ĕç** хавасланатарать. **Ĕç** пире телейлĕ пурăнма май парать. **Ĕç** çĕршыва тĕреклетет. Эпир **ĕçе** хисеплетпĕр. **Ĕçпе** мухтава тухатпăр.

***114-мĕш хăнăхтару.*** Çак предложенисене çырса илĕр. Паллă туна япала ячĕсем мĕнле падежра тăнине тата вĕсем предложенире мĕнле член пулса тăнине кăтартса парăр.

Пирĕн çĕршыва коммунистсен **партийĕ** ертсе пырать. **Партире** пирĕн çĕршывăн чи лайăх ывăлĕ-хĕрĕсем тăраççĕ. Чи лайăх ударниксем, стахановецсем **партие** кĕреççĕ. **Партин** вунсаккăрмĕш съезчĕ çĕнĕ устав йышăнчĕ. Пирĕн çĕршыври мĕнпур ĕççынни **партие** юратса хисеплет.

Ят падежĕнчи япала ячĕ предложенире **подлежащи** пулать. Ытти падежсенчи (ятмар падежсенчи) япала ячĕ предложенире **кĕçĕн член** пулать.

***115-мĕш хăнăхтару.*** Предложенисене вуласа тухăр. Паллă туна япала ячĕсенчен хăшĕ ят падежĕнче, хăшĕ тăву падежĕнче тăраççĕ?

1. Сĕтел çинче **кĕнеке** выртать. Эпĕ Петĕре **кĕнеке** патăм.
2. Çырмана **юр** тулнă. Эпир нӳхрепе **юр** тултартăмăр.
3. Çырмара **шыв** юхать. Эпĕ **шыв** ăсса килтĕм.

Ят падежĕнче тăракан япала ячĕпе тăву падежĕнче тăракан япала ячĕ час-часах форма енчен пĕр-пĕринпе пĕр пекех пулаççĕ. Вĕсене пĕр-пĕринчен икĕ майпа уйăрма пулать:

1. Сăмах предложенире подлежащи пулать пулсан, вăл ят падежĕнче тăрать; çав формăри сăмахах предложенире кĕçĕн член пулать пулсан, вăл тăву падежĕнче тăрать.

2. Ят падежĕнчи сăмахăн падеж аффиксĕ пулмасть, тăву падежĕнчи сăмахăн падеж аффиксĕ пулма пултарать. Сăмахран, *Сĕтел çинче кĕнеке выртать* предложенире *кĕнекене* теме май килмест, иккĕмĕш предложенире: *Эпĕ Петĕре кĕнекене патăм* теме те май килет.

***116-мĕш хăнăхтару.*** Çак предложенисене вуласа тухăр. Паллă туна япала ячĕсем хăшĕ пару падежĕнче, хăшĕ тăву падежĕнче тăнине кăтартса парăр.

1. Эпĕ **ĕнене** утă патăм. Эпĕ кĕтӳре **ĕнене куртăм.**
2. Эпĕ **сĕтеле** кĕнеке хутăм. Эпĕ **сĕтеле** куçарса лартрăм.
3. Эпĕ **юлташа** кĕнеке патăм. Эпĕ **юлташа** куртăм.

Пару падежĕнче тăракан япала ячĕ час-часах тăву падежĕнче тăракан япала ячĕпе пĕр формăллă пулать. Ун пек чухне вĕсене пĕр-пĕринчен çапла уйăрма пулать: пару падежĕнче тăракан япала ячĕ падеж аффиксĕсĕр пулма пултараймасть, тăву падежĕнче тăракан япала ячĕн падеж аффиксне кăларса пăрахсан та предложенири шухăш улшăнмасть. Сăмахран, *Эпĕ ĕне утă патăм* теме май килмест, *Эпĕ кĕтӳре ĕне куртăм* теме май килет.

## 18 §. *Та, те, тан, тен* аффикссене çырасси.

***117-мĕш хăнăхтару.*** Çак предложенисене вуласа тухăр. Менле сăмахсенче ***ра, ре, ран, рен*** çырнине, мĕнле сăмахсенче ***та, те, тан, тен*** çырнине асăрхăр.

1. Пирĕн атте **колхозран** лаша илчĕ те **вăрмантан** вутă тиесе килчĕ. Аттепе пĕрле **вăрманта** эпĕ те пултăм.
2. Эпĕ **шкулта** вĕренетĕп. Атте **колхозра бригадирта** ĕçлет. Пирĕн **килтен** виççĕн вĕренеççĕ.
3. Пирĕн **пӳртре** илемлĕ картинăсем пур. **Тĕпелте** патефон ларать. **Кĕтесре** радио репродукторĕ пур.
4. Ман шăллăмăн **букварь** пур. **Букварьте** тĕрлĕ картинăсем нумай. Шăллăм **букваре** вулать. **Букварьтен** илемлĕ картинăсем ӳкерсе илет.

***Л, н, р*** саспаллисемпе пĕтекен япала ячĕсем вырăн падежĕнче ***та***, туху падежĕнче ***тан***, аффикссене йышăнаççĕ. Ытти саспаллисемпе пĕтекен япала ячĕсем çак падежсенче ***ра, ран***, аффикссене йышăнаççĕ.

***Ль, нь, рь*** саспаллисемпе пĕтекен япала ячĕсем вырăн падежĕнче ***те***, туху падежĕнче ***тен*** аффикс

йышăнаççĕ. Камăнлăх, пару падежĕнче, çемçетекен паллă (ь) тухса ӳкет (*букварĕн, букваре; мăкăнĕн, мăкăне; кукăлĕн, кукăле*).

***118-мĕш хăнăхтару.*** Çак предложенисене çырса илер. Точкăсем вырăнне ***ра, ре, ран, рен, та, те, тан, тен*** аффикссенчен кирлине кĕртсе çырăр.

1. Пахча... çимĕç нумай. 2. Кĕлет... тырă нумай. 3. Ачасем шкул... вĕренеççĕ. 4. Колхозниксем вăрман... таварăнаççĕ. 5. Пичче пасар... таварăнчĕ. 6. Çăка вĕрене... çемçерех. 7. Кĕпер... анатарах мăн çурт ларать. 8. Хир... трактор сасси илтĕнчĕ. 9. Пирĕн кил... шкул аякра мар. 10. Пирĕн ял Шупашкар... аллă километрта ларать.

## 19 §. *Та* тата *те* татăксене çырасси.

***119-мĕш хăнăхтару.*** Предложенисене вуласа тухăр, весенче ***та, те*** аффиксемпе пĕр пек уйрăм пĕчĕк сăмахсем пуррине асăрхăр.

1. Вăрманта йывăç нумай. Вăрман **та**, хир **те** чĕрĕлчĕ.

2. Ялта халь хут пĕлменнисем çукпа пĕрех. Ял **та** хула пекех культурăланса пырать.

3. Эпĕ килте час-часах радио итлетĕп. Кунтан пирĕн кил **те** инçе мар.

4. Кашни пинте вунă çĕр. Ленин пин **те** тăхăрçĕр çирĕм тăваттăмĕш çулта вилнĕ.

***Та, те*** падеж аффиксĕсемпе пĕр пек ***та*** тата ***те*** пур. Вĕсене грамматикăра ***союз*** теççĕ. Вĕсем предложенире сăмахсене çыхăнтараççĕ е икĕ предложение пĕр-пĕринпе çыхăнтараççĕ.

***Та, те*** падеж аффиксĕсене сăмахпа пĕрле çыпăçтарса çыраççĕ, пĕр йышши сăмахсене е предложенисене çыхăнтаракан ***та, те*** союзсене сăмахсенчен уйрăм çыраççĕ.

*120-мĕш хăнăхтару.* Çак предложенисене çырса илĕр. Скобкăра панă ***та, те***-сене кирлĕ çĕрте сăмахпа пĕрле çыпăçтарса, кирлĕ çĕрте сăмахран уйрăм çырăр.

Çуркунне çывăхарать. Çĕр (те) кĕскелчĕ, хĕвел (те) ăшшине ытларах пара пуçларĕ. Ял (та) хĕрсе çуракине хатĕрленеççĕ. Колхозра (та), совхозра (та) ака хатĕрĕсене хатĕрлеççĕ. Ака часах юр (та) хускалĕ. Вăрман (та) кайăксен юрри янăра пуçлĕ. Хир (те) тракторсем кĕрлеме тапратĕç. Эпир (те) йĕлтĕрсене, конькисене пуçтарса хурăпăр.

*121-мĕш хăнăхтару.* 120-мĕш хăнăхтарури пекех тăвăр.

1. Кашни ял (та) тенĕ пекех халĕ клуб е вуламалли çурт пур. 2. Ял (та) та, хулара (та) пысăк стройка пырать. 3. Совет Союзĕнчи пур халăх (та) пĕр тан правалла. 4. Хир (те) халь сухапуç тĕсне (те) кураймăн. 5. Атăл (та) пулă нумай. 6. Шкул çулне çитнисем пур (те) шкул (та) вĕренеççĕ. 7. Çуркунне хир (те), вăрман (та), улăх (та) чĕрĕлеççĕ. 8. Аякра-аякра, пит çӳл (те) аэроплан вĕçет.

## 20 §. Хăшпĕр хупă сасăсем пĕрпеклени.

*122-мĕш хăнăхтару.* Статьяна вуласа тухăр. Паллă тунă сăмахсене каланипе çырни хушшинчи уйрăмлăха асăрхăр.

### Экскурси.

— **Юлташсем**! Паян эпир вăрмана экскурсие **каятпăр**,— терĕ пире учитель. Вăрманти **йывăççен**, чĕрчунсен хĕллехи пурăнăçне сăнама эпир экскурсие кайрăмăр. Вăрманпа **пыратпăр**, шакăлтатса **калаçатпăр**. **Йывăççем** çулçисене пĕтĕмпех тăкнă. **Йывăççен** турачĕсене пас тытнă. **Чăрăшсем**, хырсем йĕпписене тăкман, **ытти йывăççем** хушшинче вĕсем сип-симĕссĕн курăнса лараççĕ. Ака пĕр йывăç çинчен пас тăкăнма пуçларĕ. „Кунта пакша йăви пулмалла“,— терĕ учитель. Йывăç çинелле тинкерсе **пăхатпăр**. Часах пакшине те куртăмăр. Вăл пире йăви патĕнчен аяккалла илĕртсе **каясшăн**, йывăç çинчен йывăç çине сиксе пирĕнтен тарать.

Хăшпĕр хупă сасăсем, юнашар тăрсан, пĕрпекленеççĕ. *С* сасă *ш* сасăпа юнашар тăнă чухне *ш* сасă пек илтĕнет, *ç* сасăпа юнашар тăнă чухне *ç* сасă пек илтĕнет. *Т* сасă *п* сасă умĕнче тăнă чухне *п* сасă пек илтĕнет.

Çапла, *юлташсем* вырăнне *юлташшем*, *каясшăн* вырăнне *каяшшăн*, *йывăççем* вырăнне *йывăççем*, *пыратпăр* вырăнне *пыраппăр* илтĕнет. Анчах çырассине, сăмах пулăвне пăхса, *юлташсем*, *каясшăн йывăçсем*, *пыратпăр* тесе çырмалла.

***123-мĕш хăнăхтару.*** Çак сăмахсене каланипе вĕсене çырни хушшинче мĕнле уйрăмлăх пуррине кăтартса парăр:

тантăшсем, пĕлĕшсем, хурăнташсем, карăшсем;
каясшăн, килесшĕн, çырасшăн, пĕлесшĕн, ўсесшĕн;
вĕренесшĕн, ăмăртасшăн, палăртасшăн, пырасшăн;
чĕкеçсем, çимĕçсем, кавăрçсем, куçсем;
вулатпăр, çыратпăр, шутлатпăр, вĕренетпĕр, ĕçлетпĕр, ăмăртатпăр.

***124-мĕш хăнăхтару.*** Çак сăмахсем мĕнле илтĕннине тата вĕсене мĕнле çырмаллине астăвăр.

| Калаççĕ: | Çыраççĕ: | Калаççĕ: | Çыраççĕ: |
|---|---|---|---|
| юлташшем | юлташсем | чухлашшăн | чухласшăн |
| пĕлĕшшем | пĕлĕшсем | курашшăн | курасшăн |
| хурăнташшем | хурăнташсем | пуççем | пуçсем |
| тантăшшем | тантăшсем | çăлкуççем | çăлкуçсем |
| чăрăшшем | чăрăшсем | чĕкеççем | чĕкеçсем |
| карăшшем | карăшсем | куççем | куçсем |
| акăшшем | акăшсем | хăлаççем | хăлаçсем |
| вулашшăн | уласшăн | каççем | каçсем |
| çырашшăн | çырасшăн | пиççе | пиçсе |
| пĕлешшĕн | пĕлесшĕн | куççа | куçса |
| вĕренешшĕн | вĕренесшĕн | çыпăççа | çыпăçса |
| ўсешшĕн | ўсесшĕн | каççерен | каçсерен |
| ăмăрташшăн | ăмăртасшăн | çыраппăр | çыратпăр |
| уташшăн | утасшăн | калаçаппăр | калаçатпăр |
| чупашшăн | чупасшăн | каçаппăр | каçатпăр |
| | | хĕпĕртеппĕр | хĕпĕртетпĕр |

| | | | |
|---|---|---|---|
| каяшшӑн | каясшӑн | килеппӗр | килетпӗр |
| килешшӗн | килесшӗн | чӗнеппӗр | чӗнетпӗр |
| пырашшӑн | пырасшӑн | ҫӳреппӗр | ҫӳретпӗр |
| илешшӗн | илесшӗн | хавасланаппӑр | хавасланатпӑр |

## 21 §. Паллӑ ячӗсем.

*125-мӗш хӑнӑхтару.* Ҫакӑнта ӳкерне япаласем мӗнлине пелтерекен сӑмахсене тупӑр.

Т ӗ с л ӗ х: *Кӑвак лаша.*



. . . лаша.



. . . ӗне



. . . мулкач



. . . кашкӑр.



. . . тилӗ.



. . . упа.

*126-мӗш хӑнӑхтару.* Ҫак сӑвва вуласа тухӑр. Сӑвӑрав япала мӗнлине пӗлтерекен сӑмахсене япала ячӗсемпе пӗрле ҫырса илӗр.

Шартлама хӗл иртсе кайрӗ.
Ҫитрӗ ырӑ ҫуркунне.
Чӗвӗлти чӗкеҫ янратрӗ
хӑйӗн савӑк юррине.
Тӑрӑ шыв юхать васкавлӑн
ешӗл улӑх варрипе.
Аслӑ хир кӗрлет янравлӑн
хурҫӑ трактор сассипе.

***127-мĕш хăнăхтару.*** Çак предложенисене вуласа тухăр. Паллă тунă сăмахсем япалан мĕнле паллисене пĕлтернине каласа парăр.

1. **Хĕрӳ** хĕвел тухрĕ. 2. **Ялти** çынсем вăранчĕç. 3. **Çуркуннехи** çанталăк илемĕпе савăнтарать. 4. **Вăрманти** кайăксем **илемлĕ** юррисене шăрантараççĕ. **Аслă** хирте **ирхи** ĕç вĕрет.

> Япала мĕнлине пĕлтерекен сăмахсене **паллă ячĕсем** теççĕ.
>
> Паллă ячĕсем япала мĕнлине, ăçтине, хăçанхине пĕлтереççĕ. Вĕсен ыйтăвĕсем: ***мĕнле? ăçти? хăçанхи?*** (***илемлĕ юрă, вăрманти кайăк, ирхи ĕç***).

***128-мĕш хăнăхтару.*** Çак статьяна çырса илĕр. Паллă ячĕсене аялтан йĕр туртса паллă тăвăр. Кашни паллă ячĕсине унăн ыйтăвне лартăр.

## Çуркуннехи вăрман.

Çуркуннехи вăрман хĕллехи вăрман пек мар. Йывăççем симĕс, ачаш çулçăсем кăлараççĕ. Йывăççен айĕнче илемлĕ чечексем çурăлаççĕ. Савăнăçлă кайăксен хаваслă юрри кăмăла çĕклентерет. Уçă сывлăш кăкăра уçать. Мĕнпур чĕрчун хĕллехи ыйхăран вăраннă. Пурте ырă çуркуннене саваççĕ.

***129-мĕш хăнăхтару.*** Çак статьяра паллă тунă япала ячĕсене вĕсен умĕнче тăракан, вĕсем мĕнлине пĕлтерекен паллă ячĕсемпе пĕрле çырса илĕр.

Асăрхăр: япала ячĕ улшăннă май паллă ячĕ улшăнать-и?

## Анлă Атăл.

Темиçе пин километр юхса выртать анлă **Атăл**. Анлă **Атăлăн** сылтăм çыранĕ çӳллĕ, сулахай çыранĕ айлăм. Анлă **Атăлтан** пысăкрах шыв Европăра урăх çук. Анлă **Атăлта** темĕн чухлĕ пулă пур. Анлă **Атăл** тăрăх темĕн чухлĕ пароход, баржăсем, кимĕсем çӳреççĕ, тавар турттараççĕ. Анлă **Атăлăн** çыранĕсем хĕррипе улăхсем сарăлса выртаççĕ.

> Паллă ячĕ япала ячĕпе пĕрле тăрать. Паллă ячĕ **падежсем тăрăх улшăнмасть** (вĕçленмест).

*130-мӗш хӑнӑхтару*. Ҫакӑнти япала ячӗсене кӑтартнӑ палла ячӗсемпе пӗрле илсе вӗҫлесе тухӑр. Паллӑ ячӗсем падежсем тӑрӑх улшӑннипе улшӑнманнине асӑрхӑр.

| | | |
|---|---|---|
| Ят. | Аслӑ хир. | Ирхи сывлӑм. |
| К. | . . . . | . . . . . . . |
| П. | . . . . | . . . . . . . |

*131-мӗш хӑнӑхтару*. Ҫак тӗслӗхсене пӑхса тухӑр. Япала ячӗн хисепӗ улшӑннӑ май ун ҫумӗнчи паллӑ ячӗ улшӑнать-и?

| | |
|---|---|
| Сарӑ кайӑк... | Сарӑ кайӑксем. |
| Ешӗл калча. | Ешӗл калчасем. |
| Кӑтра хурӑн. | Кӑтра хурӑнсем. |
| Тутлӑ улма. | Тутлӑ улмасем. |
| Хӗрлӗ чечек. | Хӗрлӗ чечексем. |
| Тарӑн ҫырма. | Тарӑн ҫырмасем. |
| Хирти тырӑ. | Хирти тырӑсем. |
| Хӗллехи ҫул. | Хӗллехи ҫулсем. |

*132-мӗш хӑнӑхтару*. Ҫак пӗррелле хисепре тӑракан сӑмахсене нумайлӑ хисепе куҫарӑр.

Тӗслӗх: *Сурхи ҫилсем.*

| | |
|---|---|
| Сурхи ҫил. | Тӗрӗс сехет. |
| Суллахи кун. | Уяр кун. |
| Лапсӑркка хурӑн. | Атӑлти сулӑ. |
| Шурӑ чечек. | Улӑхри хӑмӑш. |
| Хура вӑрман. | Ҫырмари хӑва. |
| Ватӑ йӑмра. | Ҫамрӑк чӑрӑш. |
| Пысӑк кӳлӗ. | Тутлӑ ҫырла. |
| Ҫирӗп юман. | Яка йӗлтӗр. |
| Йӑрансӑр хир. | Вӑрӑм вӗрен. |
| Ҫӗнӗ ҫурт. | Аслӑ урам. |

Паллӑ ячӗсем хисепсем тӑрӑх та улшӑнмаҫҫӗ: *ҫӗнӗ* пӳрт, *ҫӗнӗ* пӳртсем.

*133-мӗш хӑнӑхтару*. Точкӑсем вырӑнне кирлӗ паллӑ ячӗсене лартса, ҫырса илӗр.

## Ç у р к у н н е.

Килчĕ ... çуркунне,
килчĕ, ячĕ ăшăтса.
Хĕвел савать тĕнчене,
хĕл ыйхинчен вăратса
... вăрман чĕрĕлет,
... тумтир тăхăнать.
... хир те ешерет,
илемĕпе мухтанать.

... чечексен
... шăрши сарăлать.
Пур çĕрте те кайăксен,
... юрри янăрать.
Çўлте, пĕлĕт айĕнче,
тăри юрри илтĕнет.
... курăк çийĕнче
путек-сурăх сиккелет.

Кирлĕ паллă ячĕсем: *хура, ырă, тĕрлĕ-тĕрлĕ, лайăх, çемçе, çеçен, ырă, ешĕл.*

***134-мĕш хăнăхтару.*** 133-мĕш хăнăхтарури пекех тăвăр.

## Çырма

Çырма юхать кĕрлесе,
... ялăн çумĕпе.
Хĕвел, тĕрĕ тĕрлесе,
вылять унăн шывĕпе.

... шывăн ăшĕнче
... пĕлĕт вылянать.
... йăмра тайăлса,
тĕсне пăхса савăнать.

Кирлĕ паллă ячĕсем: *кăвак, вата, тăрă, аслă.*

***135-мĕш хăнăхтару.*** Çак япала ячĕсем çумне май килекен паллă ячĕсене тупăр. Тупнă паллă ячĕсене япала ячĕсемпе пĕрле çырса хурăр.

Çăлтăр. Çил. Çул. Кăвар. Лаша. Шăнкăрч. Автан. Кашкăр. Мулкач. Упа. Курак. Кăвакарчăн. Комбайн. Автомобиль. Трактор. Плуг. Сўре. Сенĕк.

***136-мĕш хăнăхтару.*** Çак сăмахсене кĕртсе, предложенисем тăвăр.

Кăвак пĕлĕт. Вăрманти кайăк. Вайлă çумăр. Аслă тинĕс. Такăр çул. Шыври пулă. Çурхи ĕç. Ирхи апат. Паянхи хаçат Юлашки хыпарсем.

Тĕслĕх: *Кăвак пĕлĕтре тăри юрă шăрантарать.*

***137-мĕш хăнăхтару.*** Çакăнта кăтартнă тĕслĕхсене пăхса, хăвăр пĕрпекрех пĕлтерĕшлĕ паллă ячĕсем тупăр.

1. Вăйлă, паттăр, хастар, çирĕп.
2. Хăюллă, харсăр, парăнусăр.
3. Илемлĕ, ...
4. Хаваслă, ...
5. Тирпейлĕ, ...
6. Шанчăклă, ...
7. Яштак, ...
8. Лайăх, ...

*138-мĕш хăнăхтару.* Çакăнта кăтартнă паллă ячĕсене хирĕç пĕлтерĕшлĕ паллă ячĕсем тупса çырăр.

Тĕслĕх: *Вĕри шыв—сивĕ шыв.*

| | | |
|---|---|---|
| Вĕри шыв. | Çамрăк лаша. | Тӳрĕ çул. |
| Вăйлă çил. | Пысăк ĕне. | Анлă улăх. |
| Уяр кун. | Çăмлă сурăх. | Çĕнĕ пӳрт. |
| Ăшă çанталăк. | Ăратлă сысна. | Çывăхри ял. |
| Тарăн кӳлĕ. | Пĕчĕк путек. | Тăрă шыв. |
| Ансăр урам. | Пысăк пахча. | Шывлă çырма. |

## 22 §. Паллă ячĕсем предложенире кĕçĕн член пулни.

***Хаяр хĕл çитрĕ. Вăйлă сивĕсем тапранчĕç. Шурă юр çăвать. Пăрлă йывăçсем шавламасăр лараççĕ.***

Паллă ячĕсем предложенире **кĕçĕн членсем** пулаççĕ; вĕсем япала ячĕсемпе çыхăнса тăраççĕ, япала ячĕсене ăнлантарса параççĕ.

*139-мĕш хăнăхтару.* Предложенисене вуласа тухăр. Паллă ячĕсем мĕнле япала ячĕсемпе çыхăнса тăнине кăтартăр. Паллă ячĕсен ыйтăвĕсене каласа парăр.

1. **Пĕчĕк** ачасем урамра выляççĕ. Пысăкрах ачасем шкула кайнă.

2. **Тарăн** кӳлĕ йăлтăртатса выртать. **Çивчĕ** пулăсем кӳлĕре выляççĕ. **Çамрăк** ачасем пулă тытаççĕ.

3. **Анлă** Атăл пăрпа витĕннĕ. **Шурă** пароходсем затонра тăраççĕ.

***140-мĕш хăнăхтару.*** Çак предложенисенче подлежащине, сказуемăйне, кĕçĕн членсене кăтартса парăр. Аялтан туртнă паллă ячĕсем мĕнле япала ячĕсемпе çыхăнса тăнине каласа парăр.

**Кĕрхи** çумăр вăрăма пырать.
**Хирти** ĕçсем пĕтнĕ.
Анкартинче **мăнтăр** капансем лараççĕ.
**Ирхи** хĕвел кантăкран пăхать.
**Симĕс** калча ешĕрсе çитĕнет.

> Кашни япала ячĕ çумне **май** килекен паллă ячĕсене темиçе те çырса хума пулать.

***141-мĕш хăнăхтару.*** Çакăнта панă кашни япала ячĕ çумне пĕрер паллă ячĕ тупса çырса хурăр.

Хĕл, çул, йывăçсем, юр, çанталăк.

***142-мĕш хăнăхтару.*** Çакăнта панă кашни япала ячĕ çумне май килекен паллă ячĕсене пурне те çырса хурăр.

Лĕтчик, тракторист, тимĕрçĕ, пионер.

Т ĕ с л ĕ х: *Маттур, хăюллă... лĕтчик.*

## 23 §. *-лă, -лĕ* аффикс хушăнса пулнă паллă ячĕсене çырасси.

***143-мĕш хăнăхтару.*** Сулахай енчи паллă тунă сăмахсене çырнине сылтăм енчи паллă тунă сăмахсене çырнипе танлаштарăр.

| | |
|---|---|
| *Анлă* кӳлĕ | *Пулăллă* кӳлĕ |
| *Çăмлă* сурăх | *Мăйракаллă* сурăх |
| *Пĕлĕтлĕ* кун | *Тĕтреллĕ* кун |
| *Аслă* пионер | *Пултаруллă* пионер |
| *Тирпейлĕ* çурт | *Йĕркеллĕ* çурт |
| *Хастарлă* çын | *Хăюллă* çын |
| *Илемлĕ* йывăç | *Çулçăллă* йывăç |
| *Хаваслă* ĕç | *Амăртуллă* ĕç |

> ***Лă, лĕ*** аффикс хушăннипе пулнă паллă ячĕсенче сăмах тĕпĕ уçă сасăпа пĕтет пулсан, ***ллă*** е ***ллĕ*** çырмалла.

*144-мěш хǎнǎхтару*. Çак предложенисене çырса илěр. Точкǎсем вырǎнне *-лǎ, -лě, -ллǎ, -ллě* аффикссенчен пěр аффиксне, кирлине, кěртсе çырǎр.

Пирěн социализм... çěршывра хěрӳ ěç пырать. Пирěн савǎнǎç..., телей... пурǎнǎçа пěтересшěн тǎрǎшакан Гитлера хирěç пěтěм çěршыв тǎчě. Кашни заводра, колхозра ǎнлану... дисциплина çирěпленсе пырать. Пирěн хǎват..., хастар..., çěнтерӳ... Совет Çарě фашистла çынçиенсене çапса çěмěрчě.

*145-мěш хǎнǎхтару*. Çак сǎвва çырса илěр. Точкǎсем вырǎнне ***-лǎ, -лě, -ллǎ, -ллě*** аффикссенчен пěрне, кирлине, кěртсе çырǎр.

Ем-ешěл çеç вǎрман,
чечек... улǎх.
Шǎпчǎк юрри янǎрать
кунта хǎюллǎн.
Ман çамрǎклǎх çав улǎх пек
чечек...,
ман çамрǎклǎх çав юрǎ пек
хǎю...

## 24 §. Сǎпатлǎ местоименисем.

*146-мěш хǎнǎхтару*. Сулахай енчипе сылтǎм енчи предложенисене танлаштарса пǎхǎр. Вěсен хушшинче мěнле уйрǎмлǎх пур? Сылтǎм енче *Верук, Верука, ачасем* вырǎнне мěнле сǎмахсем тǎраççě?

| | |
|---|---|
| 1. Пěчěк **Верук** урампа пынǎ. | Пěчěк Верук урампа пынǎ. |
| 2. Сасартǎк Верука йытǎ хǎвалама пуçланǎ. | Сасартǎк **ǎна** йытǎ хǎвалама пуçланǎ. |
| 3. **Верук** йытǎран тарма тытǎннǎ. | **Вǎл** йытǎран тарма тытǎннǎ. |
| 4. **Верук** йытǎран тарнине ачасем курнǎ. | **Вǎл** йытǎран тарнине ачасем курнǎ. |
| **Ачасем** йытта хǎваласа янǎ. | **Вěсем** йытта хǎваласа янǎ. |

Предложенире япала ячĕсем вырăнне ***эпĕ, эсĕ, вăл, эпир, эсир, вĕсем*** йышши сăмахсем (ят вырăнне калакан сăмахсем) пулма пултараççĕ. Вĕсене **местоименисем** теççĕ.

*Эпĕ, эпир*—1-мĕш сăпат местоименийĕсем.
*Эсĕ, эсир*—2-мĕш сăпат местоименийĕсем.
*Вăл, вĕсем*—3-мĕш сăпат местоименийĕсем.

1-мĕш сăпат—кам калаçаканни.
2-мĕш сăпат—кама калатпăр, çавă.
3-мĕш сăпат—кам е мĕн çинчен калатпăр, çавă.

***147-мĕш хăнăхтару.*** Çак предложенисене çырса илĕр. Местоименисене аялтан йĕр туртса паллă тăвăр.

1. Эпĕ Павăлтан аслăрах. 2. Эпĕ вунă çулта, вăл саккăрта анчах.
2. Атте вăрмантан тавăрăнчĕ. Вăл мана: „Эсĕ лашана колхоза илсе кайса пар-ха“,—терĕ.
3. Эпир виççĕн, эсир иккĕн: пурĕ пĕрле пиллĕкĕн.
4. Павăл килте çук, вăл кинона кайнă.

## 25. § Сăпатлă местоименисем вĕçленни.

Пĕрреллĕ хисеп.

| | | | |
|---|---|---|---|
| Ят. **Кам** пионер? | *эпĕ* | *эсĕ* | *вăл* |
| К. **Камăн** галстук пур? | *ман-(ăн)* | *сан-(ăн)* | *ун-(ăн)* |
| П. **Кама** значок кирлĕ? | *ман-а* | *сан-а* | *ăн-а* |
| Т. Вожатăй **кама** чĕнчĕ? | *ман-а* | *сан-а* | *ăн-а* |
| Пĕр. **Кампа** лагере каятпăр? | *ман-па* | *сан-па* | *ун-па* |
| В. Ялав **камра**? | *ман-ра* | *сан-ра* | *ун-ра* |
| Тух. **Камран** кĕнеке илнĕ? | *ман-ран* | *сан-ран* | *ун-ран* |

Нумайлă хисеп.

| | | |
|---|---|---|
| Ят. *эпир* | *эсир* | *вĕсем* |
| К. *пи-рĕн* | *сир-ĕн* | *вĕ-сен-(ĕн)* |
| П. *пи-ре* | *сир-е* | *вĕ-сен-е* |
| Т. *пи-ре* | *сир-е* | *вĕ-сен-е* |

| | | |
|---|---|---|
| Пĕр. *пирĕн-пе* | *сирĕн-пе* | *вĕ-сем-пе* |
| В. *пирĕн-те* | *сирĕн-те* | *вĕ-сен-че* |
| Тух. *пирĕн-тен* | *сирĕн-тен* | *вĕ-сен-чен* |

Сăпатлă местоименисем, падежсем тăрăх улшăннă чухне, япала ячĕсем йышăнакан аффикссенех йышăнаççĕ.

Виççĕмĕш сăпатăн пĕрреллĕ хисепри парупа тăву падежĕсенче **уна** выранне **ăна** çыраççĕ.

***148-мĕш хăнăхтару.*** Çак сăвва çырса илĕр. Сăпатлă местоименисене аялтан йĕр туртса паллă тăвăр. Сăпатлă местоименисен вĕçленĕвĕн тĕслĕхĕсене пăхса, сăвăри местоименисем кашни мĕнле падежра тăнине кăтартса парăр.

## Партизанка.

—Эсĕ-и çав тĕртсе çунтартăн
пирĕн витене ĕнер?
—Эпĕ!—тет хĕр лăпкăн хирĕç.
Нимĕçсем пĕрне-пĕри
тĕлĕнсе кăшт пăхса илчĕç...
—Пултаратăн!—тет штабри.—
...А миçемĕш çын эсĕ
партизан отрядĕнчен?
Ыттисем ăçта ĕçлеççĕ,
тĕп йăви ăçта вĕсен?
—Каламастăп!..—терĕ, хыттăн
касса татрĕ çамрăк хĕр.

Хусанкай („Таня" поэмăран.)

***149-мĕш хăнăхтару.*** Çак предложенисенче местоименисем мĕнле хисеприне, мĕнле сăпатрине каласа парăр.

1. Манăн пичче тракторист. Вăл питĕ тĕплĕ ĕçлет. Унпа ĕçлекенсем ăна питĕ мухтаççĕ. Вĕсем унран ударлă ĕçлеме вĕренеççĕ.

2. Манăн аппа колхозра ĕнесем пăхать. Вăл ударница. Унăн ятне хĕрлĕ хăма çине çырнă.

***150-мĕш хăнăхтару.*** Çак предложенисенчи местоимени-сен хисепне, сăпатне, падежне кăтартса парăр.

1. **Пирĕн** килте радио пур, **сирĕн** пур-и?
2. **Эсĕ ман** пата пыр-ха, **санпа** пĕрле урока хатĕр-ленме çăмăл.
3. **Эпĕ сире** вулама кĕнеке панăччĕ, **эсир ăна** илсе килтĕр-и?
4. **Эсир** хăяр вăррисене шăтарса пăхман, **вĕсене** акиччен шăтарса пăхас пулать.

***151-мĕш хăнăхтару.*** а) ***Эпĕ, эсĕ, вăл*** местоименисене кĕртсе, предложенисем тăвăр. ă) ***Эпир, эсир, вĕсем*** местоименисене кĕртсе, предложенисем тăвăр.

***152-мĕш хăнăхтару.*** Точкăсем вырăнне ***вăл*** местоимение кирлĕ падежра лартса çырăр.

## Ясли.

Анна аппа заводра ĕçлет. Завода ... 8 сехетре каять. ... пĕчĕк хĕрача пур. Кашни ир, ĕçе кайнă чухне, Анна аппа хăйпе пĕрле хĕрне илет те ... яслине кĕртсе хăварать. Яслире ... пăхаççĕ, апат çитереççĕ. Ĕçрен тухсан, Анна аппа яслине кĕрсе, хĕрне илсе тухать те ... пĕрле килне таврăнать.

***153-мĕш хăнăхтару.*** Çак предложенисенчи местоименисене пĕрремĕш сăпатран иккĕмĕш сăпата куçарса, предложенисем тăвăр.

Тĕслĕх: *Эсĕ вунпĕр çулта. Санăн аçу, аннӳ, пиччӳ, инкӳ пур.*

Эпĕ вунпĕр çулта. Манăн атте, анне, пичче, инке пур. Эпĕ çичĕ çул тултарсан, мана шкула ячĕç. Мана ăсатма шкула анне пычĕ. Манпа пĕрле вăл шкул заведующийĕ патне кĕчĕ. Мана шкула илчĕç. Çав çулта манпа пĕрле 39 ача вĕренме кĕчĕ. Эпĕ ун чухне вулама, çырма пĕлместĕм. Халь ĕнтĕ эпĕ вулама та, çырма та, шутлама та пĕлетĕп. Историпе географие те пĕлетĕп. Эпĕ лайăх вĕренетĕп. Мана шкулта отличник теççĕ.

## 26 §. Сӑпатлӑ местоименисен предложенири вырӑнӗ.

*Эпӗ виҫҫӗмӗш класра вӗренетӗп.*

*Ҫуркунне эпӗ тӑваттӑмӗш класа куҫатӑп.*

*Тепӗр ҫултан эпӗ пуҫламӗш шкултан вӗренсе тухатӑп.*

*Мана атте календарь илсе пачӗ.*

> Сӑпатлӑ местоимени предложенире е **подлежащи** е **кӗҫӗн член** пулать.

***154-мӗш хӑнӑхтару.*** Ҫак предложенисене вуласа тухӑр, Предложенире подлежащи пулса тӑракан местоименисене кӑтартса парӑр.

Эпир шӑллӑмпа пӗрле шыв хӗррине кайрӑмӑр. Эпӗ вӑлтапа весласем илтӗм, вӑл кимӗ патне чупрӗ. Вӑл кимме салтса илчӗ. Эпӗ ӑна вӑлтапа весласене патӑм. Вӑл вӗсене кимӗ ҫине хучӗ те мана алӑ пачӗ. Эпӗ кимӗ ӑшне сикрӗм те, эпир ишсе кайрӑмӑр.

***155-мӗш хӑнӑхтару.*** Предложенисене ҫырса илӗр. Подлежащи пулса тӑракан местоименисене аялтан йӗр туртса паллӑ тӑвӑр.

1. Эпир сочинени ҫыртӑмӑр. 2. Атте мана ҫӗнӗ коньки илсе пачӗ. 3. Ҫулла эпӗ Шупашкара каятӑп. 4. Манпа пӗрле йӑмӑк та пырать. 5. Эпир тӑван ҫӗршыва юрататпӑр. Унтан пахи пирӗншӗн нимӗн те ҫук.

Вӗреннине аса илмелли ыйтусем.

1 Местоименисем тесе мӗнле сӑмахсене калаҫҫӗ?
2. Местоименисем мӗнле улшӑнаҫҫӗ?
3. Местоимени предложенире мӗнле член пулать?

## 27 §. Глаголсем.

***156-мӗш хӑнӑхтару.*** Ҫак сӑвва вуласа тухӑр. Паллӑ тунӑ сӑмахсене ҫырса илӗр.

### Ҫурхи юрӑ.

Кайӑксем ҫунат ҫапса **юрлаҫҫӗ**,
сывлӑмпала сассисене **уҫаҫҫӗ**,

Ту хыҫӗнчен ҫурхи хӗвел **тухать.**
Ҫӗршывӑмӑр хастарлӑхпа **тулать.**

Улмуҫҫисем кӗрнеклӗн **хумханаҫҫӗ.**
Чечекӗсем ҫеҫкисене **сараҫҫӗ.**
Ҫӗре **сырса илет** им-пыл шӑрши,
хаваслӑн та тулли **сывлать** ҫӗршыв.

Тӳпе урлӑ самолётсем **каҫаҫҫӗ,**
ҫӳл тӳпене шӑп ҫурмаран **касаҫҫӗ.**
Вӗсен ҫинче ылттӑн хӗвел **кулать.**
Ҫӗршывӑмӑр хастарлӑхпа **тулать.**

Ҫак сӑвӑри паллӑ тунӑ сӑмахсем япала мӗн тунине пӗлтереҫҫӗ?

Япала мӗн тунине е выртнине-тӑнине пӗлтерекен сӑмаха **глагол** теҫҫӗ.

**Юрлаҫҫӗ, хумханаҫҫӗ, сывлать, кулать** сӑмахсем—**глаголсем.**

***157-мӗш хӑнӑхтару.*** Ҫак сӑвва ҫырса илӗр. Глаголсене аялтан йӗр туртса паллӑ тӑвӑр.

Мотор пекех тапать чӗрем,
хавасланать ҫак ирӗкшӗн.
Пирӗншӗн ешерет ҫерем.
Ҫут шыв та юхать пирӗншӗн.

Йӗри-тавра пӑхатӑп эп—
чечекленет ҫӗршывӑмӑр.
Хавас юрра юрлатӑп эп.
Сывӑ пултӑр ҫулпуҫӑмӑр!

***158-мӗш хӑнӑхтару.*** Калава вуласа тухӑр. Ӑна ҫырса илӗр. Глаголсене аялтан йӗр туртса паллӑ тӑвӑр.

## Ҫил-тӑман.

Мана службӑна янӑ вырӑналла ҫитсе пыратпӑр. Таврара пушхирсем сарӑлса выртаҫҫӗ. Пӗтӗм тавра шурӑ юрпа витӗннӗ. Хресченсен ҫуни йӗрӗ тӑрӑх кӳме кӑштӑртатса шӑвать.

Таçта аякра пĕр шурă пĕлĕт татăкĕ курăнать. Малтан эпĕ ăна пĕр-пĕр пĕччен сăрт е тĕмеске пулĕ терĕм. Ямшăк мана ку пĕлĕт çил-тăман тухасса палăртни çинчен пĕлтерчĕ.

Ямшăк чуптарма пуçларĕ. Учĕсем маттуррăн юртаççĕ. Çил вăйланчĕ. Вĕтĕ юр вĕтĕртетме тытăнчĕ. Унтан сасартăк çерçи пуçĕ пек чăмаккасем лаплатма пуçларĕç. Çилĕ улать. Тăман çавăрттарса тухрĕ. Нимĕн те курăнмасть.

## 28 §. Глаголсем сăпатланни.

***159-мĕш хăнăхтару.*** Статьяна çырса илĕр. Точкăсем вырăнне кирлĕ сăмахсем хушăр.

### Красноармеец, тракторист тата тимĕрçĕ.

(Кам мĕнле калать).

Красноармеец тракториста калать: „Эпĕ ССР Союзне..., эсĕ тракторпа..., вăл (тимĕрçĕ) тимĕр...“—тет.

Тимĕрçĕ красноармееца калать: „Эпĕ тимĕр..., эсĕ Совет Союзне..., вăл (тракторист) тракторпа...,“—тет.

Тракторист тимĕрçе калать: „Эпĕ тракторпа..., эсĕ тимĕр..., вăл (красноармеец) Совет Союзне...“,—тет.

Кирлĕ сăмахсем:

| | | |
|---|---|---|
| *сыхлатăп* | *шаккатăп* | *ĕçлетĕп* |
| *сыхлатăн* | *шаккатăн* | *ĕçлетĕн* |
| *сыхлать* | *шаккать* | *ĕçлет* |

***160-мĕш хăнăхтару.*** 159-мĕш хăнăхтарăва тепĕр хут çырса илĕр: ***эпĕ, эсĕ, вăл*** местоименисене нумайлă хисепре лартса, точкăсем вырăнне çак глаголсене кĕртсе пырăр.

| | | |
|---|---|---|
| *сыхлатпăр* | *шаккатпăр* | *ĕçлетпĕр* |
| *сыхлатăр* | *шаккатăр* | *ĕçлетĕр* |
| *сыхлаççĕ* | *шаккаççĕ* | *ĕçлеççĕ* |

Глагол пĕрремĕш, иккĕмĕш тата виççĕмĕш сăпатри местоименипе пĕрле тăрать пулсан, унăн вĕçĕ улшăнса пырать.

Глагол сăпат тăрăх улшăннине **сăпатланни** теççĕ.

## 29 §. Глаголăн вăхăчĕсем.

| | |
|---|---|
| Эпĕ çыру *çыратăп.* | Эпĕ *вĕренетĕп* |
| Эпĕ çыру *çыртăм.* | Эпĕ *вĕрентĕм.* |
| Эпĕ çыру *çырăп.* | Эпĕ *вĕренĕп.* |
| Эпĕ кĕнеке *вулатăп.* | Эпĕ шкула *çӳретĕп.* |
| Эпĕ кĕнеке *вуларăм.* | Эпĕ шкула *çӳрерĕм.* |
| Эпĕ кĕнеке *вулăп.* | Эпĕ шкула *çӳрĕп.* |

Глаголсем **хальхи** вăхăта, **иртнĕ** вăхăта, **пулас** вăхăта пĕлтерме пултараççĕ.

Хальхи вăхăтри глагол ĕç халь, калаçнă вăхăтра пулнине пĕлтерет: *çыратăп, вулатăп, вĕренетĕп, ĕçлетĕп.*

Иртнĕ вăхăтри глагол пулса иртнĕ ĕçе пĕлтерет: *çыртăм, çырнă, вуларăм, вуланă, вĕрентĕм, вĕреннĕ.*

Пулас вăхăтри глагол ĕç калаçнă вăхăтран кайран пуласса пĕлтерет: *çырăп, вулăп, вĕренĕп, çӳрĕп.*

***161-мĕш хăнăхтару.*** Çак глаголсене хальхи вăхăтра лартса çырăр.

Тĕслĕх: *Канатăп. Ĕмĕтленетĕп.*

Кан... Выля... Пыр... Çĕкле... Кĕр... Йĕркеле... Ĕмĕтлен... Шутла...

***162-мĕш хăнăхтару.*** Çак глаголсене иртнĕ вăхăтра лартса çырăр.

Тĕслĕх: *Ĕçлерĕм (ĕçленĕ). Вăйлантăм (вăйланнă).*

Ĕçле... Вĕрен... Сыхла... Юрла... Кала... Кур... Кул... Савăн... Хаваслан... Вăйлан...

***163-мĕш хăнăхтару.*** Çак глаголсене пулас вăхăтра лартса çырăр.

Тĕслĕх: *Ситĕнĕп. Пуçтарăп.*

Çитĕн... Ӳс... Çыр... Хастарлан... Кӳл... Тăвар... Турттар... Çут... Çур... Пуçтар... Виç...

***164-мĕш хăнăхтару.*** Çак предложенисенчи иртнĕ вăхăтри глаголсене хальхи вăхăта куçарăр.

Тĕслĕх: *Ванюк шкулта вĕренет.*

Ванюк шкулта вĕреннĕ. Вăл пур предметсемпе те лайăх вĕреннĕ. Ванюк уроксене йĕркеллĕ хатĕрленсе пынă. Учитель ыйтсан, вăл яланах тĕрĕс ответ панă. Ванюк хăйĕн юлташĕсене те вĕренӳре пулăшса пынă.

***165-мĕш хăнăхтару.*** Çак сăвăри хальхи вăхăтри глаголсене пулас вăхăта куçарса пырăр.

Тĕслĕх: *Шавлĕ, кашлĕ сĕм вăрман, вĕçĕ-хĕрри курăнмĕ.*

**Вăрманта.**

Шавлать, кашлать сĕм вăрман,
вĕçĕ-хĕрри курăнмасть.
Кутсăр-пуçсăр çил тухсан,
чарăнассăн туйăнмасть.

Тапхăр-тапхăр çил килет,
пăлтăр-палтăр çавăрса.
Тĕттĕм вăрман ӳхĕрет,
çĕре çитех авăнса.

Хура пĕлĕт пĕрмаях
шăвать вăрман тăрринче.
Ярать çиçĕм çĕр çурсах
хура пĕлĕт хушшинче.

Аçа çапать, шартлатать,
пĕтĕм тĕнче кисренет.
Çумăр çырма пек юхать,
лупашкасенче кĕрлет.

*166-мӗш хӑнӑхтару.* Ҫак статьяра тӗл пулакан глаголсен вӑхӑтне кӑтартса парӑр.

Ӗлӗк ӗҫҫыннисем патша чиновникӗсен, буржуазин, кулаксен пусмӑрӗнче пурӑннӑ. Ӗҫҫынни, темӗн чухлӗ ӗҫлесен те, ҫителӗклӗ пурӑнӑҫпа пурӑнайман.

Халь ӗҫҫыннисен пурӑнӑҫӗ пӗтӗмпех урӑхланчӗ. Совет влаҫӗ ӗҫҫыннисене ирӗке кӑларчӗ. Хресченсем колхозсене пӗрлешрӗҫ. Хресченсем колхозра хӑйсен телейне тупрӗҫ. Вӗсем халь пуян пурӑнӑҫпа пурӑнаҫҫӗ. Фабрикӑсем, заводсем государство аллинче тӑраҫҫӗ. Рабочисем кунне 7—8 сехет ӗҫлеҫҫӗ.

Пурӑнӑҫ ҫулсерен лайӑхланса пырать. Малашне вӑл тата телейлӗрех, тата ҫутӑрах пулӗ.

*167-мӗш хӑнӑхтару.* Паллӑ тунӑ глаголсен вӑхӑчӗсене кӑтартса парӑр.

## Сӑпка юрри.

Пӗчӗк ывӑлӑмҫӑм, ҫывӑр,
тутлӑ тӗлӗк кур.
Ӳсӗн эс паттӑр та сывӑ,
ҫитӗнӗн маттур.

Ӗмӗтсем таҫтах **вӗҫеҫҫӗ**,
питӗ инҫене.
Пулӑн эс, ачам, вӗҫевҫӗ,
пулӑн инженер.

Кайӑн тинӗс-океанӑн
пӑрӗсем урлах.
Ҫавӑнпа анну халь санӑн
савӑнса юрлать.

Ҫитӗн эс сив тинӗс урлӑ
ҫурҫӗрӗн вӗҫне.
Сан ҫинчен пин юрӑ юрлӗҫ,
ырлӗҫ сан ӗҫне.

## 30 §. Глаголсем хальхи вăхăтра сăпатланни.

Пĕрреллĕ хисеп.

| | | |
|---|---|---|
| 1-мĕш сăпат. | Эпĕ *кур-ат-ăп,* | *илт-ет-ĕп.* |
| 2-мĕш сăпат. | Эсĕ *кур-ат-ăн,* | *илт-ет-ĕн.* |
| 3-мĕш сăпат. | Вăл *кур-ать,* | *илт-ет.* |
| 1-мĕш сăпат. | Эпĕ *шутла-т-ăп,* | *ĕçле-т-ĕп.* |
| 2-мĕш сăпат. | Эсĕ *шутла-т-ăн,* | *ĕçле-т-ĕн.* |
| 3-мĕш сăпат. | Вăл *шутла-ть,* | *ĕçле-т.* |

Нумайлă хисеп.

| | | |
|---|---|---|
| 1-мĕш сăпат. | Эпир *кур-ат-пăр,* | *илт-ет-пĕр.* |
| 2-мĕш сăпат. | Эсир *кур-ат-ăр,* | *илт-ет-ĕр.* |
| 3-мĕш сăпат. | Вĕсем *кур-аç-çĕ,* | *илт-еç-çĕ.* |
| 1-мĕш сăпат. | Эпир *шутла-т-пăр,* | *ĕçле-т-пĕр.* |
| 2-мĕш сăпат. | Эсир *шутла-т-ăр,* | *ĕçле-т-ĕр.* |
| 3-мĕш сăпат. | Вĕсем *шутла-ç-çĕ,* | *ĕçле-ç-çĕ.* |

**Глаголăн хальхи вăхăт аффиксĕсем.**

| | Пĕрреллĕ хисеп. | Нумайлă хисеп. |
|---|---|---|
| 1-мĕш сăпатра: | ***атăп, етĕп, тăп, тĕп,*** | ***атпăр, етпĕр, тпăр, тпĕр,*** |
| 2-мĕш сăпатра: | ***атăн, етĕн, тăн, тĕн,*** | ***атăр, етĕр, тăр, тĕр,*** |
| 3-мĕш сăпатра: | ***ать, ет, ть, т.*** | ***аççĕ, еççĕ; ççĕ(яççĕ)*** |

***168-мĕш хăнăхтару.*** Сăвăри хальхи вăхăтри глаголсене çырса илĕр.

Вĕсен сăпатне кăтартса парăр.

**Пахча.**

Шарлатса юхать çырма.
Хĕрринче ун хурама,
аякра кăтра вăрман.

Лапăра ача-пăча
ӳстерет пĕчĕк пахча.
Пит хитре: йĕркен-йĕркен
чавса тухнă йăрансем.
Ав унта йĕркен-йĕркен
çитĕнеççĕ çимĕçсем.
Шав ĕçлеççĕ ачасем.
Ӳркенмеççĕ çамрăксем.

***169-мĕш хăнăхтару.*** Çак глаголсене хальхи вăхăтра сăпатласа тухăр.

Эпĕ хавасланатăп. Эпĕ хĕпĕртетĕп. Эпĕ ĕмĕтленетĕп. Эпĕ васкатăп.

***170-мĕш хăнăхтару.*** Çакăнти паллă тунă хальхи вăхăтри глаголсене мĕнле çырмаллине асăрхăр.

Куллен **вăйланать, çитĕнет, çирĕпленет** пирĕн тăван çĕршыв. Халиччен çын пурăнман вырънсенче халь çĕнĕ заводсем **лараççĕ**, çĕнĕ хуласем **лараççĕ**, электричество çути **йăлтăртатать**. Пирĕн çĕршывра темĕн чухлĕ çĕнĕ заводсемпе фабрикăсем **ĕçлеççĕ**, çĕнĕ ялсем, хуласем **чечекленеççĕ**. Çĕршывăн оборонине çирĕплетес тĕлĕшпе хĕрӳ ĕç **пырать**.

Глагол хытă сăмах пулсан, ун вĕçĕнче виççĕмĕш сăпатра пĕрреллĕ хисепре ***ать*** çырмалла, нумайлă хисепре ***аççĕ*** çырмалла: ***чупать***, ***чупаççĕ***.

Глагол çемçе сăмах пулсан, ун вĕçĕнче виççĕмĕш сăпатра пĕрреллĕ хисепре ***ет*** çырмалла, нумайлă хисепре ***еççĕ*** çырмалла: ***вĕçет***, ***вĕçеççĕ***.

***171-мĕш хăнăхтару.*** Сăвва çырса илĕр. Çырса пĕтермен глаголсене çырса пĕтерсе пырăр.

Вĕçевçĕсем çурçĕрелле васка...
Сад пахчинче ĕçле... аслă пахчаçă.
Хăй пахчинчи кашни йывăçах
çитĕнтер... çак тимлĕхлĕ хуçа.

Кайăкĕсем пахча тулли юрла...
Юррипеле пахчаçа ырла...

Çак çĕр çинчи чи хаклă тăван ят
юрăсенче хĕвел пек шăран...

*172-мĕш хăнăхтару.* 171-мĕш хăнăхтару пекех тăвăр.

### Хĕрӳллĕ ĕç.

Ĕçле..., шавла... вĕр-çĕнĕ станоксем,
металл шăрат... гигант домнăсем.
Васка..., чуп... вăрăм поездсем,
тем тĕрлĕ тавар турттар... вĕсем.
Кĕрле... хурçă трактор колхоз хирĕнче,
шавла... молотилка пуян йĕтемре.
Комбайнĕ хир тăрăх хуçа пек çӳре...
Васка... ĕçчен халăх хĕрӳллĕ ĕçре.

## 31 §. Глаголсем пулас вăхăтра сăпатланни.

*173-мĕш хăнăхтару.* Çакăнта паллă тунă глаголсем мĕнле вăхăта пĕлтернине, мĕнле аффикссем йышăннине каласа парăр.

Хула урамĕ тăрăх виçĕ пионер пырать. Вĕсенчен пĕри калать: „Эпĕ лётчик **пулăп**. **Ӳсĕп**, **вĕренĕп**, самолёт çинче **вĕçĕп**“,—тет.

Иккĕмĕшĕ калать: „Эпĕ инженер **пулăп**. Çĕнĕ хула **тăвăп**, çута вокзал **тăвăп**, шыв урлă кĕперсем **хывăп**“,—тет.

Виççĕмĕшĕ калать: „Эпĕ художник **пулăп**. Çав çутă вокзала картина çине **ӳкерĕп**. Клуба картинăсем туса **çакăп**“,—тет. Виççĕшĕ те вĕсем тăван çĕршывшăн усăллă çынсем пулма ĕмĕтленеççĕ.

*Пулăп, вĕçĕп, вĕренĕп, ӳсĕп* — пулас вăхăтри глаголсем. Глаголсем пулас вăхăтра çапла сăпатланаççĕ:

Пĕрреллĕ хисеп.

| | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|
| 1-мĕш | сăпат. | Эпĕ | *çыр-ăп,* | *вул-ăп,* | *ӳс-ĕп.* |
| 2-мĕш | сăпат. | Эсĕ | *çыр-ăн,* | *вул-ăн,* | *ӳс-ĕн.* |
| 3-мĕш | сăпат. | Вăл | *çыр-ĕ,* | *вул-ĕ,* | *ӳс-ĕ.* |

Нумайлӑ хисеп.

| | | | | |
|---|---|---|---|---|
| 1-мӗш сӑпат. | Эпир | *çыр-ӑпӑр* | *вул-ӑпӑр* | *ӳс-ӗпӗр.* |
| 2-мӗш сӑпат. | Эсир | *çыр-ӑр* | *вул-ӑр* | *ӳс-ӗр.* |
| 3-мӗш сӑпат. | Вӗсем | *çыр-ӗç* | *вул-ӗç* | *ӳс-ӗç.* |

**Пулас вӑхӑт аффиксӗсем.**

| Пӗрреллӗ хисеп. | Нумайлӑ хисеп. |
|---|---|
| 1-мӗш сӑпатра: *ӑп, ӗп* | ***ӑпӑр, ӗпӗр*** |
| 2-мӗш сӑпатра: *ӑн, ӗн* | ***ӑр, ӗр*** |
| 3-мӗш сӑпатра: *ӗ* | ***ӗç.*** |

***174-мӗш хӑнӑхтару.*** Тӗслӗхе пӑхса, çак глаголсене пулас вӑхӑтра сӑпатласа тухӑр.

Эпӗ *юрлӑп.* Эпӗ *ӗçлӗп.* Эпӗ *çитӗнӗп.* Эпӗ çӗршыва *сыхлӑп.*

***175-мӗш хӑнӑхтару.*** Паллӑ тунӑ глаголсен вӑхӑтне, хисепне, сӑпатне кӑтартса парӑр.

Ыран пирӗн шкулта вечер пулать. Эпӗ вечерта **сӑвӑсем вулӑп**, эсӗ юрӑсем **юрлӑн**, Коля кулӑшла калавсем каласа **парӗ**. Пурте эпир хамӑр çитӗнӳсене **кӑтартӑпӑр**. Хамӑр та **савӑнӑпӑр**, çынсем те **савӑнӗç**.

***176-мӗш хӑнӑхтару.*** Çак предложенисенчи глаголсене пулас вӑхӑтра пӗрреллӗ хисепре те, нумайлӑ хисепре те сӑпатласа тухӑр.

Эпӗ поездсене ертсе çӳрӗп. Эпӗ учитель пулӑп. Эпӗ дирижабльпе вӗçӗп. Эпӗ командир пулма вӗренӗп.

## 32 §. Иртнӗ вӑхӑт.

***177-мӗш хӑнӑхтару.*** Çакӑнта паллӑ тунӑ глаголсем мӗнле вӑхӑта пӗлтереççӗ?

Октябрьти социализмла Аслӑ революци 1917-мӗш çулта **пулчӗ.**

Партин вунсаккăрмĕш съезчĕ 1939-мĕш çулхи мартăн вуннăмĕшĕнче **пуçланчĕ.** Съезд партин çĕнĕ уставне **йышăнчĕ**, партин Центральнăй Комитетне **суйларĕ.**

Октябрьти социализмла Аслă революци 1917-мĕш çулта **пулнă.**

Партин вунсаккăрмĕш съезчĕ 1939-мĕш çулта мартăн вуннăмĕшĕнче **пуçланнă.** Съезд партин çĕнĕ уставне **йышăннă**, партин Центральнăй Комитетне **суйланă.**

Чăваш чĕлхинче глаголсен **курса иртнĕ вăхăт** тата **курмасăр иртнĕ вăхăт пулать.**

1. Калаканни пулса иртнĕ ĕçе хăй курнă пек калать пулсан, глаголсем курса иртнĕ вăхăтра пулаççĕ: *пуçланчĕ*, *пулчĕ*, *суйларĕ.*

2. Калаканни пулса иртнĕ ĕçе хăй курман пек калать пулсан, глаголсем курмасăр иртнĕ вăхăтра пулаççĕ: *пуçланнă*, *пулнă*, *суйланă.*

***178-мĕш хăнăхтару.*** Çак тĕслĕхсенче скобкăра лартнă икĕ сăмахран хăшне каламалла?

а) Эпĕ кăçал çулла пионерсен лагерĕнче (*пулнă*, *пултăм*). Унта пире питĕ аван (*пăхрĕç*, *пăхнă*). Кунне тăватă хутчен апат (*çитеретчĕç*, *çитернĕ*). Вăйăсем выляма, юрăсем юрлама (*вĕрентнĕ*, *вĕрентрĕç*).

ă) Майăн пĕрремĕшне уявласси 1889-мĕш çултан пуçланса (*кайрĕ*, *кайнă*). Гарри Айзман Америкăри шкулта (*вĕренчĕ*, *вĕреннĕ*). Кунта вăл пионер отрячĕ (*тунă*, *турĕ*). Çав отряда шкулта вĕренекен рабочи ачисем пурте (*кĕчĕç*, *кĕнĕ*). Гарри пур ачасене те рабочисен ĕçĕшĕн кĕрешĕве тухма (*чĕнчĕ*, *чĕннĕ*).

## Курса иртнĕ вăхăтри глагол сăпатлании.

Пĕрреллĕ хисеп.

| | |
|---|---|
| 1-мĕш сăпат. Эпĕ *вула-рăм* | *ĕçле-рĕм* |
| 2-мĕш сăпат. Эсĕ *вула-рăн* | *ĕçле-рĕн* |
| 3-мĕш сăпат. Вăл *вула-рĕ* | *ĕçле-рĕ* |

| | | |
|---|---|---|
| 1-мĕш сăпат. Эпĕ | *çыр-тăм* | *пĕл-тĕм* |
| 2-мĕш сăпат. Эсĕ | *çыр-тăн* | *пĕл-тĕн* |
| 3-мĕш сăпат. Вăл | *çыр-чĕ* | *пĕл-чĕ* |

Нумайлă хисеп.

| | | |
|---|---|---|
| 1-мĕш сăпат. Эпир | *вула-рăмăр* | *ĕçле-рĕмĕр* |
| 2-мĕш сăпат. Эсир | *вула-рăр* | *ĕçле-рĕр* |
| 3-мĕш сăпат. Вĕсем | *вула-рĕç* | *ĕçле-рĕç* |
| 1-мĕш сăпат. Эпир | *çыр-тăмăр* | *пĕл-тĕмĕр* |
| 2-мĕш сăпат. Эсир | *çыр-тăр* | *пĕл-тĕр* |
| 3-мĕш сăпат. Вĕсем | *çыр-чĕç* | *пĕл-чĕç* |

**Курса иртнĕ вăхăт аффиксĕсем.**

| Пĕрреллĕ хисеп. | Нумайлă хисеп. |
|---|---|
| 1-мĕш сăпатра: *рăм, рĕм: тăм, тĕм;* | *рăмăр, рĕмĕр, тăмăр, тĕмĕр;* |
| 2-мĕш сăпатра: *рăн, рĕн; тăн, тĕн;* | *рăр, рĕр, тăр, тĕр;* |
| 3-мĕш сăпатра: *рĕ, чĕ;* | *рĕç, чĕç.* |

Глагол *р, л, н* сасăпа пĕтет пулсан, аффиксĕнче курса иртнĕ вăхăтра ***р*** выранне ***т*** пулать: *çыр-тăм, ĕнер-тĕм, пул-тăм, кил-тĕм, кан-тăм, чĕн-тĕм.*

Виççĕмĕш сăпат аффиксĕсенче ***т*** сасă ***ч*** сасса куçать: *çыр-чĕ, çыр-чĕç; ил-чĕ, ил-чĕç.*

***179-мĕш хăнăхтару.*** Иш, ярăн, кур, вĕрен глаголсене **курса иртнĕ вăхăтра** сăпатласа тухăр. Сăпатланине тĕслĕх çине пăхса тĕрĕслĕр.

***180-мĕш хăнăхтару.*** Çак сăвăри паллă тунă глаголсем мĕнле вăхăтрине, хăш сăпатрине, мĕнле хисеприне каласа парăр.

Пахчана ирех эп **тухрăм,**
уççăн-уççăн сывлама.
Эп тумлам-тумламăн **пухрăм,**
**шăрçаларăм** сывлăма.

Шурӑмпуҫӗпе **ҫӗклентӗм,**
хӗвел **тухрӗ** васкаса.
Шӑпчӑк сассине **итлерӗм,**
**хам та ятӑм** юрласа.

***181-мӗш хӑнӑхтару.*** Ҫак предложенисене вуласа тухӑр. Паллӑ тунӑ глаголсене ҫырса илӗр. Вӗсем мӗнле вӑхӑтрине, хӑш сӑпатрине, мӗнле хисепре тӑнине каласа тухӑр.

Тӗслӗх: *ларчӗ*—глагол, курса иртнӗ вӑхӑтра, виҫҫӗмӗш сӑпатра, пӗрреллӗ хисепре тӑрать.

Хӗвел анса **ларчӗ.** Каҫ **пулчӗ.** Акӑ аякра купӑс сасси **илтӗнчӗ.** Уйӑх **тухрӗ.**

Пӳртри хӑй ҫутисем **сӳнчӗҫ.** Вӑйӑри ҫамрӑксем тӗрлӗ юрӑсем **юрларӗҫ** те **саланчӗҫ.**

## Курмасӑр иртнӗ вӑхӑтри глаголсем улшӑнманни.

***182-мӗш хӑнӑхтару.*** Курмасӑр иртнӗ вӑхӑт мӗнле аффикс йышӑннине асӑрхӑр.

Эпӗ *ҫыр-нӑ, пӗл-нӗ.* Эпир *ҫыр-нӑ, пӗл-нӗ.*
Эсӗ *ҫыр-нӑ, пӗл-нӗ.* Эсир *ҫыр-нӑ, пӗл-нӗ.*
Вӑл *ҫыр-нӑ, пӗл-нӗ.* Вӗсем *ҫыр-нӑ, пӗл-нӗ.*

Курмасӑр иртнӗ вӑхӑтри глагол тӗпӗ ҫумне ***нӑ, нӗ*** аффикс хушӑннипе пулать. Курмасӑр иртнӗ вӑхӑтри глагол сӑпат тӑрӑх та, хисеп тӑрӑх та улшӑнмасть.

***183-мӗш хӑнӑхтару.*** Ҫак сӑвӑри паллӑ тунӑ глаголсем хӑш вӑхӑтра тӑнине каласа парӑр.

### Пирӗн Конституци.

Ӑна **кӗтнӗ** ҫӗршыв, **кӗтнӗ** ҫутӑ тӗнче,
ӗмӗт **ҫуннӑ** пирте шӗл-кӑваррӑн.
Баррикадӑсенче*, чул купи хӳттинче
ӑна **чӗннӗ** Париж коммунарӗ.
**Ӗмӗтленнӗ** ӑна инҫетри ӗмӗрсем,

* Баррикада—хула урамӗсенче тӑшман пырса кӗресрен тата ӑна хирӗҫ ҫапӑҫма хӑвӑрт, тӗрлӗ япала купаласа тӑвакан хӳтлӗх.

ăна **кĕтнĕ**, **шыранă** этемлĕх.
Капитал никĕсне тĕпĕнчен кисретсе,
ун çулне уçса **панă** Маркс, Энгельс.
Тракторсем уй-хирте **кăпкалатнă** çĕре,—
уй-хирсем çăра пурлăхпа тулччăр!
Ӱссе **çитĕнчĕ** вăл çак хĕрӳллĕ ĕçре
пирĕн ĕмĕт—пирĕн Конституци.

***184-мĕш хăнăхтару.*** Сылтăм енчи глаголсем сăпатланнине сулахай енчи глаголсем сăпатланнипе танлаштарса пăхăр. Вĕсен уйрăмлăхĕсене асăрхăр.

Пĕрреллĕ хисеп.

| | |
|---|---|
| 1-мĕш с. *çыр-тăм, ӳкер-тĕм,* | *пы-тăм, кĕ-тĕм,* |
| 2-мĕш с. *çыр-тăн, ӳкер-тĕн,* | *пы-тăн, кĕ-тĕн,* |
| 3-мĕш с. *çыр-чĕ, ӳкер-чĕ.* | *пы-чĕ, кĕ-чĕ.* |

Нумайлă хисеп.

| | |
|---|---|
| 1-мĕш с. *çыр-тăмăр, ӳкер-тĕмĕр,* | *пы-тăмăр, кĕ-тĕмĕр,* |
| 2-мĕш с. *çыр-тăр, ӳкер-тĕр,* | *пы-тăр, кĕ-тĕр,* |
| 3-мĕш с. *çыр-чĕç, ӳкер-чĕç.* | *пы-чĕç, кĕ-чĕç.* |

Курмасăр иртнĕ вăхăтри глаголсем.

| | |
|---|---|
| Эпĕ *çыр-нă, ӳкер-нĕ.* | Эсĕ *пы-нă, кĕ-нĕ.* |
| Эпир *çыр-нă, ӳкер-нĕ.* | Эсир *пы-нă, кĕ-нĕ.* |

Тĕпĕ *р* сасăпа пĕтекен хăшпĕр глаголсем иртнĕ вăхăтра (икĕ формăра та) çав *р* сасса çухатаççĕ: *пыр—пытăм, пынă; тăр—тăтăм, тăнă; кĕр—кĕтĕм, кĕнĕ; пер—петĕм, пенĕ; кӳр—кӳтĕм.*
Кун пек глаголсем нумаях мар.

***185-мĕш хăнăхтару.*** Çак глаголсене курса иртнĕ вăхăтра тата курмасăр иртнĕ вăхăтра туса улăштарăр. Хăш глаголсен тĕпĕнчи *р* тухса ӳкет?

Хур, пар, çур, вĕр.

***186-мĕш хăнăхтару.*** Çулталăк вăхăтне кура, скобкăри глаголсенчен пĕрне суйласа илсе, çырса илĕр.

Çуркунне (çитрĕ, çитет, çитнĕ, çитĕ).
Кунсем (вăрăмланĕç, вăрăмланчĕç, вăрăмланаççĕ, вăрăмланнă).

Юр кайса (пĕтрĕ, пĕтет, пĕтĕ, пĕтнĕ).
Симĕс курăк (тухать, тухрĕ, тухĕ, тухнă).
Çураки (пуçланчĕ, пуçланĕ, пуçланнă, пуçланать, пĕтрĕ, пĕтнĕ, пĕтет, пĕтĕ).

## 33 §. Глаголсен тĕпĕ.

*187-мĕш хăнăхтару.* Глаголсен кашни ушкăнне пăхса тухăр. Кашни ушкăнри глаголсен пĕр пек пайĕсене асăрхăр.

**Вула-тăп, вула-тăн, вула-ть, вула-тпăр, вула-тăр, вула-ççĕ, вула-нă, вула-рăм.**

**Ĕçле-тĕп, ĕçле-тĕн, ĕçле-т, ĕçле-тпĕр, ĕçле-тĕр, ĕçле-ççĕ, ĕçле-нĕ, ĕçле-рĕм.**

Глаголсен кашни ушкăнĕн улшăнман пĕр пек пайсем пур. Вăл пайсем глаголăн тĕп пĕлтерĕшĕ пулаççĕ. Глаголăн тĕп пĕлтерĕшне пĕлтерекен улшăнман пайне глагол **тĕпĕ** теççĕ (*вула, ĕçле, кур, кил, чуп, çӳре, вĕрен).*

Глаголăн улшăнакан пайне глагол **аффиксĕ** теççĕ.

*188-мĕш хăнăхтару.* Çак предложенисене çырса илĕр. Глаголсен тĕпне аялтан йĕр туртса паллă тăвăр.

Кашни çулах майăн 1-мĕш кунĕнче тĕнчери ĕçхалăхĕ урама тухать, митингсем, демонстрацисем тусаирттерет. Пирĕн çĕршывра пур çĕрте те хĕрлĕ ялавсем вĕлкĕшеççĕ, хаваслă юрăсем янăраççĕ. Ĕçхалăхĕ савăнать, хаваслă пурăнăç панăшăн коммунистсен партине, унăн аслă çулпуçне Сталина тав тăвать.

*189-мĕш хăнăхтару.* Çак сăвăри пĕр тĕпрен кăна тăракан глаголсене (аффикссăр глаголсене) çырса илĕр.

Çĕршыв, янăра çурхи май юррипе!
Вĕç, вĕç, май юрри, Советсен çĕрĕпе!
Çĕн пурнăç хĕвел пек çиçсе улăхать,
çĕршыв манăн тулăххăн сарăлса выртать.
Ешер, ман хĕвеллĕ çĕршывăм, ялан!
Юрла, шăпчăк, уççăн çĕршыв садĕнче!
Кам халь чĕрипе, чунĕпе те пуян,—
шăпчăк пек юрла эс çамрăклăх çинчен.

## 34 §. Пулманнине е пулас çуккине пĕлтерекен глаголсем.

***190-мĕш хăнăхтару.*** Сулахай енчи глаголсемпе сылтăм енчи глаголсен пĕлтерĕшĕн уйрăмлăхне асăрхăр.

| | |
|---|---|
| Эпĕ çыру *çыратăп.* | Эпĕ çыру *çырмастăп.* |
| Ĕнер çумăр *çурĕ.* | Паян çумăр *çумарĕ.* |
| Хурсем шывра *ишеççĕ.* | Чăхсем шывра *ишмеççĕ.* |
| Кайăксем çӳле *вĕçеççĕ.* | Кăпшанкăсем çӳлех *вĕçмеççĕ.* |
| Часах çулла *пулĕ.* | Текех сивĕ *пулмĕ.* |

Сулахай енчи глаголсем ĕç пулнине е пулассине пĕлтереççĕ, сылтăм енчи глаголсем ĕç пулманнине е пулас çуккине пĕлтереççĕ.

***191-мĕш хăнăхтару.*** Çакăнти глаголсене ĕç пулманнипе пулас çуккине пĕлтерекен туса улăштарăр.

Çанталăк ăшăтрĕ. Çумăр çăвать. Хĕвел пăхать. Шыв юхать. Çиçĕм çиçет. Аслати авăтать. Çил вĕрет. Юр çăвать. Тăм ӳкет. Шыв шăнать.

### Пулманнине тата пулас çуккине пĕлтерекен глаголсем сăпатланни.

#### Пĕрреллĕ хисеп.

| | Хальхи вăхăт. | Иртнĕ вăхăт. | Пулас вăхăт. |
|---|---|---|---|
| 1 с. | Эпĕ *кай-мас-т-ăп,* | *кай-ма-р-ăм,* | *кай-м-ăп.* |
| | Эпĕ *кил-мес-т-ĕп,* | *кил-ме-р-ĕм,* | *кил-м-ĕп.* |
| 2 с. | Эсĕ *кай-мас-т-ăн,* | *кай-ма-р-ăн,* | *кай-м-ăн.* |
| | Эсĕ *кил-мес-т-ĕн,* | *кил-ме-р-ĕн,* | *кил-м-ĕн.* |
| 3 с. | Вăл *кай-мас-ть,* | *кай-ма-р-ĕ,* | *кай-м-ĕ.* |
| | Вăл *кил-мес-т,* | *кил-ме-р-ĕ,* | *кил-м-ĕ.* |

#### Нумайлă хисеп.

| | | | |
|---|---|---|---|
| 1 с. | Эпир *кай-мас-т-пăр,* | *кай-ма-р-ăмăр,* | *кай-м-ăпăр.* |
| | Эпир *кил-мес-т-пĕр,* | *кил-ме-р-ĕмĕр,* | *кил-м-ĕпĕр.* |
| 2 с. | Эсир *кай-мас-т-ăр,* | *кай-ма-р-ăр,* | *кай-м-ăр:* |
| | Эсир *кил-мес-т-ĕр,* | *кил-ме-р-ĕр,* | *кил-м-ĕр.* |
| 3 с. | Вĕсем *кай-маç-çĕ,* | *кай-ма-р-ĕç,* | *кай-м-ĕç.* |
| | Вĕсем *кил-меç-çĕ,* | *кил-ме-р-ĕç,* | *кил-м-ĕç.* |

Ĕç пулманнине пĕлтерме хальхи вăхăтра глагол тĕпĕ çумне *мас*, *мес* аффикс хушăнать, иртнĕ вăхăтра *ма*, *ме* аффикс хушăнать, ĕç пулас çуккине пĕлтерме пулас вăхăтра *м* аффикс хушăнать.

***192-мĕш хăнăхтару.*** Çак статьяна çырса илĕр. Пулманнине пĕлтерекен глаголсене аялтан йĕр туртса паллă тăвăр. Вăл глаголсен вăхăтне, сăпатне, хисепне каласа парăр.

Ют çĕршывсенчи революциллĕ рабочисем пирĕн тăван çĕршыври пурăнăç епле юсанса пынине асăрхаса тăраççĕ. Пирĕн Совет Союзне тĕнчери мĕнпур рабочи хăйĕн тăван çĕршывĕ тесе хисеплет.

Капитализмлă государство рабочишĕн тăван çĕршыв пулма пултараймасть. Капитализмлă государствăра рабочи телейлĕ пурăнăç кураймасть. Унта нумай рабочисем хăйсене тăранмалăх ĕç те тупаймаççĕ.

Совет Союзĕ тĕнчери мĕнпур пролетарисен тăван çĕршывĕ пулса тăрать. „Пире ют çĕр пĕр пусăм та кирлĕ мар. Анчах хамăр çĕре те, хамăр çĕре пĕр вершук та никама та памастпăр“. (Сталин).

***193-мĕш хăнăхтару.*** Çак предложенисене çырса илĕр. Пулнине пĕлтерекен глаголсене пĕр йĕрпе, пулманнине пĕлтерекен глаголсене икĕ йĕрпе аялтан туртăр.

Пире капиталистсем кураймаççĕ. Вĕсем пирĕн çĕршывра власть рабочисемпе хресченсен аллинче тăнине юратмаççĕ. Ирсĕр Гитлер пирĕн çине сăлтавсăрах килсе тапăнчĕ. Анчах пирĕн совет ĕç халăхĕ, пирĕн Совет Çарĕ ăна хирĕç çĕкленчĕ. Нимĕç фашисчĕсен ĕç тухмарĕ. Пирĕн паттăр Совет Çарĕ, пирĕнпе туслă çĕршывсен çарĕсемпе пĕрле, нимĕç фашисчĕсене çапса çĕмĕрчĕ.

***194-мĕш хăнăхтару.*** Çак глаголсене хире-хирĕçле пĕлтерĕшлĕ глаголсем тупăр.

| | |
|---|---|
| *Вулать—вуламасть* | *Пăхмасть—пăхать* |
| Вылять—... | Утмасть—... |
| Шавлать—... | Шутламасть—... |
| Ывăнать—... | Пытанмасть—... |
| Пырать—... | Вĕрмест—... |
| Килет—... | Ешермест—... |
| Вĕçет—... | Пиçмест—... |

Ĕç пулманнине пĕлтерекен глаголсен вĕçĕнче, виççĕмĕш сăпатра хальхи вăхăтра, пĕрреллĕ хисепре хытă сăмахра ***мастъ***, çемçе сăмахра ***мест*** çырмалла; нумайлă хисепре хытă сăмахра ***маççĕ***, çемçе сăмахра ***меççĕ*** çырмалла.

***195-мĕш хăнăхтару.*** Çак глаголсене кĕртсе, çуркунне çинчен тĕрлĕ предложенисем тăвăр.

Хĕртет. Пĕçертет. Вĕрмест. Курăнмасть. Кăтиклет. Юрлать. Хĕпĕртеççĕ. Выляççĕ.

Предложенисем тума пулăшакан япала ячĕсем: *юр, хĕвел, çил, чăхă, тăри, ачасем.*

***196-мĕш хăнăхтару.*** а) Сăвва çырса илĕр. ă) Глаголсене аялтан йĕр туртса паллă тăвăр.

Çут ирĕк—хĕвел тăвăл витĕр çутатрĕ,
тăван аслă Ленин кăтартрĕ çула.
Пире халăх тивçĕшĕн Сталин ӳстерчĕ,
çĕклерĕ ĕçе, чĕнчĕ паттăр пулма.

Чаплă, мухтавлă пул, ирĕк Çĕршывăмăр,
халăх телейĕн хăвачĕ санра!
Халăх ялавĕпе, совет ялавĕпе
паттăр утар çĕнтерсе малалла!

## 35 §. Глагол предложенире сказуемăй пулни.

Глаголсем предложенире сказуемăй пулаççĕ.

***197-мĕш хăнăхтару.*** Предложенисене вуласа тухăр, глагол-сказуемăйсене кăтартса парăр.

1. Тулă пучах кăларать. 2. Ыраш хумханать. 3. Вăрман кашлать. 4. Çил вăйлăн вĕрет. 5. Хирте тырăсем ӳсеççĕ. 6. Улăхра курăк ешерет. 7. Шыв шăнкăртатса юхать.

***198-мĕш хăнăхтару.*** Калава çырса илĕр, глагол-сказуемăйсене аялтан йĕр туртăр.

### Упа.

Кĕркунне упа вăрман чăтлăхне чи шала кĕрсе кайрĕ. Унта вăл пĕр чăрăш айне шăтăк чаврĕ. Шăтăк тĕпне упа вĕтĕ туратсем сарчĕ. Çиеле вăл çапă витрĕ. Вара упа шăтăка кĕрсе выртрĕ.

Хĕл çитрĕ. Юр пĕтĕм вăрмана витсе хучĕ. Çил-тăмансем улама тытăнчĕç. Анчах упа тĕлĕрсе çеç выртать. Шăтăкра ăна ăшă.

**Вĕреннине аса илмелли ыйтусем.**

1. Глагол тесе мĕнле сăмахсене калаççĕ?
2. Глаголсем мĕнле улшăнаççĕ?
3. Хальхи вăхăтри глагол ĕç хăçан пулнине пĕлтерет?
4. Иртнĕ вăхăтри глагол мĕнле ĕçе пĕлтерет?
5. Глаголсем тата мĕнле вăхăта пĕлтерме пултараççĕ?
6. Глаголăн мĕнле пайне глагол тĕпĕ теççĕ?
7. Глагол аффиксĕ тесе глаголăн мĕнле пайне калаççĕ?
8. Глагол предложенире мĕнле член пулать?

## 36 §. Вĕреннине аса илсе çирĕплетмелли хăнăхтарусем.

*199-мĕш хăнăхтару.* Çак предложенисене хăвăртан сăмахсем хушса, пĕчĕк калав çырăр.

### Утă çинче.

Çулла. Çанталăк уяр. Хĕвел пĕçертет. Курăк çитĕнсе çитнĕ. Колхозниксем çулаççĕ. Çавасем шăхăраççĕ. Утă типет. Ачасем выляççĕ.

*200-мĕш хăнăхтару.* Çак сăвăри предложенисенче подлежащисене тата сказуемăйсене кăтартса парăр.

### Çуллахи ир.

Шупка шурăмпуçĕ
шуса хăпарать.
Ирхи çăлтăр вучĕ
сÿнсе çухалать.

Çÿлелле шăваççĕ
кăвак тĕтресем.
Улăха васкаççĕ
хурсен картисем.

Йăлтăр сывлăмланчĕç
чечек-курăксем.
Çерем çине анчĕç
уйри кĕтÿсем.

Хĕвел курăнайчĕ,
çĕршыв савăнать.
Ял çынĕ вăранчĕ,
ĕçе тытăнать.

*201-мĕш хăнăхтару.* Çак статьяна çырса илĕр. Предложенисенче подлежащисемпе сказуемăйсене тупăр. Подлежащисене аялтан пĕр йĕр, сказуемăйсене икĕ йĕр туртса паллă тăвăр.

Аякра, çурçĕр енче, Сольвычегодск ятлă хула ларать. Ĕлĕк патша влаçĕ кунта революционерсене ссылкăна янă. Патша тарçисем Сталин юлташа та революци ĕçне ĕçленĕшĕн çак хуланах янă. Кунта Сталин икĕ çула яхăн пурăннă. Унăн хваттерĕ хула хĕрринчи пĕчĕк пӳртре пулнă. Полицисем, час-часах унта пыра-пыра, вулама чарнă кĕнекесем, революцилле çырусем шыранă. Каçсерен Сталин юлташ пĕрмаях кĕнеке вуланă, çырнă. Вăл çак аякри вырăнтан тарма май шыранă. Пĕр каçхине, çĕр тĕттĕммипе усă курса, вăл унтан тарнă.

Сталин ссылкăра пурăннă çурта халĕ совет влаçĕ музей тунă.

*202-мĕш хăнăхтару.* Çак статьяна вуласа тухăр. Кашни предложенире сказуемăйне тупăр.

## Ту çине хăпарни.

Эпир ту çине икĕ кун хăпаратпăр ĕнтĕ. Хăпарнăçемĕн ту аякки чăнкăланса пырать. Хăпарса çитесси тата çур километр юлчĕ. Анчах пирĕн çула стена пек чул пӳлчĕ. Хамăра хамăр пĕр-пĕринчен вĕренсемпе çыхрăмăр. Майĕпе çӳлелле кармашатпăр. Акă пăр çине кĕтĕмĕр. Пăр çинче утма майĕ те çук. Пуртăпа каса-каса картлашкасем тăватпăр. Сывлама йывăрланчĕ. Сывлăш çитмест. Пуç ыратать. Ăш пăтранать.

Акă эпир, юлашки вăя хурса, ту тăррине çитрĕмĕр. Пирĕн умра пĕтĕм тĕнче уçăлса кайрĕ. Таçти инçете çитиех тусем тăсăлаççĕ. Юрпа витĕннĕ ту тăррисем темĕн çӳллĕш тăраççĕ.

*203-мĕш хăнăхтару.* Çак статьяна çырса илĕр. Предложенисенчи кĕçĕн членсене аялтан туртăр.

## Сивĕ енче.

Иква ирхине юртан тунă пӳртре вăранчĕ. Вăл тиртен çĕленĕ тумтирне тăхăнчĕ. Иква шăтăкран упаленсе тула тухрĕ. Çанталăк сивĕ, тĕттĕм. Кунта хĕвел хĕлле темиçе уйăх хушши пĕрре те тухмасть. Çулла хĕвел темиçе уйăх хушши пĕрре те анмасть.

Кунта йывăç ÿсмест. Çавăнпа çынсем пÿрте юртан тăваççĕ. Çулла вĕсем тирсенчен ÿплесем тăваççĕ.

***204-мĕш хăнăхтару.*** Çак предложенисенче пĕр тĕпрен пулнă сăмахсене тупăр. Вĕсене çырса илĕр. Сăмах тĕпне аффиксĕнчен кĕске йĕрпе уйăрса çырăр.

Тĕслĕх: *пахча-çă.*

Пирĕн колхозра пит ăста пахчаçă пур. Ăна пурте пахчаçă Хветут, теççĕ. Колхозăн пахча питĕ пысăк. Хветут пахчара темĕн те пĕр ÿстерет. Кунĕ-кунĕпе вăл пахчаран тухмасть. Эпир пахчана пырсан, пахчаçă Хветут пире тутлă улмасем, çырласем çитерет.

***205-мĕш хăнăхтару.*** Çак аффикссăр сăмахсем çумне ***лă, лĕ*** аффикссем хушса, аффикслă сăмахсем тăвăр.

| | | | |
|---|---|---|---|
| вăй | телей | сăрт | ăрат |
| хăват | ăс | тĕрĕ | шыв |
| май | йĕрке | чул | вут |
| мел | тĕрек | ан | сĕт |

***206-мĕш хăнăхтару.*** Çак сăмахсем çумне ***лăх*** е ***лĕх*** аффикссем хушса, аффикслă сăмахсем тăвăр.

| | | | |
|---|---|---|---|
| ăвăс | ăста | арпа | тирпей |
| яшка | пур | тĕрĕс | тăван |
| кĕпе | ирĕк | тĕме | карта |
| эрне | хăва | шăп | вĕрен |

***207-мĕш хăнăхтару.*** Çак сыпăкри япала ячĕсене уйăрса илĕр. Кашни япала ячĕ мĕнле падежрине каласа парăр.

Отечественнăй вăрçă çулăмĕнче советсен çĕнĕ боецĕсемпе командирĕсем, лётчиксем, артиллеристсем, минометчиксем, танкистсем, пехотинецсем, моряксем пиçĕхсе çитĕнчĕç. Совет Çарĕ — тĕреклĕ те вăйлă çар пулса тăчĕ.

***208-мĕш хăнăхтару.*** Çак сăвва çырса илĕр. Сăвăри япала ячĕсем предложенире мĕнле член пулнине кăтартăр.

Çĕкленчĕ асамат кĕперĕ
ярăмланса тÿпе çине.
Ăш çумăр çитрĕ те йĕпетрĕ
паян каллех уй-хирсене.

Тасалчĕ сывлăш çумăр хыççăн,
чечек шăрши тавралăхра.
Хаваслăн та илемлĕн, уççăн
юрă янăрарĕ улăхра.
Юрлать шăпчăк, куккук та уççăн
чарăна пĕлмесĕр аватать.
Хĕвел пăхать. Каллех хавассăн
ĕçе бригада тытăнать.

*209-мĕш хăнăхтару.* Çак статьяна вуласа тухăр. Паллă тунă *кĕтӳ* сăмах кашни предложенире мĕнле падежра тăнине каласа парăр.

## Колхоз кĕтĕвĕ.

Аслă хирте пысăк кĕтӳ çӳрет. Кĕтӳре икçĕр аллă ĕне. Самăр ĕнесем сĕтеклĕ, çӳллĕ курăка çисе çӳреççĕ. Курăк лайăх пирки пĕр ĕни те кĕтӳрен тарма шутламасть. Кăнтăр çитрĕ. Кĕтĕвĕн канмалла. Кĕтӳçĕ кĕтĕве шыв хĕррине тапăра антарать.

*210-мĕш хăнăхтару.* Сăвва çырса илĕр. Паллă тунă пулă сăмах кашни предложенире мĕнле падежра тăнине каласа парăр.

## Пулă.

Хĕвел пăхать тӳпере,
пулă вылять кӳлĕре.
Пулăç ларать вăлтапа,
пулла тытать ăманпа.
Пуллăн тутлă какай те,
пуллăн тутлă вăлчи те.

Пулăç туртать вăлтине,
пулла ярать витрене.
Пулă тулчĕ витрине,
старик утрĕ хăй килне.
Каçалапа пулăран
шӳрпе пиçрĕ пит аван.

*211-мĕш хăнăхтару.* Çак статьяна вуласа тухăр. Статьяри паллă ячĕсене çырса илĕр. Скобка ăшне вĕсем кашни мĕнле ыйтура тăнине çырăр.

Тĕслĕх: *Çуллахи (хăçанхи?)*

## Çуллахи ĕçсем.

Çуллахи вăхăтра колхозра ĕç питĕ нумай. Хирти çумкурăксене çумламалла. Улăхри курăка çулса утă тумалла. Типĕ утта капана хывмалла. Кĕрхи тырăсене вырса пуçтарас пулать. Кĕрхи тырăсене вырса пĕтернĕ

çĕре çуртыррисем те пулса çитеççĕ. Колхозсен аслă пахчисенче те çулла ĕç нумай. Çавăнпа хресченсем çуллахи вăхăта ĕççи теççĕ.

*212-мĕш хăнăхтару.* Çак сăвва вуласа тухăр. Паллă тунă местоименисем мĕнле сăпатрине, мĕнле падежра тăнине каласа парăр..

Тупа тăвап эпĕ ленинец пулма,
Ленин пек хĕрӳллĕ кĕрешме, пурăнма.
Хаваслăн тапать манăн телейллĕ чĕрем:
эп Сталина куртăм тăван Кремльте.
Ун çирĕп маттур аллине тăванла
тытса чăмăртарăм таса кăмăлтан.
Çав алăпа Сталин аттемĕр пире
кăтартрĕ мăн çул—хĕвеллĕ ире.
Асĕпе вăл çӳллĕ Памир тăвĕнчен.
Ун кăмăлĕ кашни этем чĕринчех.
Хĕвел пек хĕрӳ те ачаш кăмăлпа
савса ăшăтать вăл кашни халăха.

*213-мĕш хăнăхтару.* Çак статьяна çырса илĕр. Глаголсене аялтан йĕр туртса паллă тăвăр. Кашни глаголăн вăхăтне, сăпатне, хисепне каласа парăр.

Рабочисем фабрикăсенче, заводсенче, шахтăсенче ĕçлеççĕ. Вĕсем машинăсем тăваççĕ, çĕркăмрăкĕ, нефть кăлараççĕ, ĕççыннисене кирлĕ тĕрлĕ таварсем тăваççĕ.

Колхозниксем колхозсенче ĕçлеççĕ. Вĕсем тĕрлĕ тырă акаççĕ, тĕрлĕ пахча-çимĕç лартса ӳстереççĕ, выльăх ĕрчетеççĕ.

Рабочисем хулара пурăнаççĕ. Колхозниксем ялта пурăнаççĕ. Ялпа хула çирĕп çыхăну тытаççĕ. Хула яла машинăсем, тĕрлĕ таварсем парса тăрать. Ял хулана тĕрлĕ тырă, пахча-çимĕçсем, аш-какай, сĕт-çу парса тăрать.

*214-мĕш хăнăхтару.* Çак сăвăра тĕл пулакан кашни глаголăн вăхăтне, сăпатне, хисепне кăтартса парăр.

### Хурçă ут.

Кĕр-кĕр-кĕр! кĕрлерĕ
трактор.
Тухрĕ вăл колхоз хирне.
Тĕпренех пуçларĕ паттăр
çавăрмашкăн тăприне.
Сухапуç чысне çухатрĕ,—
машинлатпăр уйсене.
Хурçă ут тухса аркатрĕ

ĕмĕрхи йăрансене.
Хурçă ут чупать
хир урлă,

хир питне чĕлет, сĕвет.
Машинăпа акнă тырпулă
уйсене илем кӳрет.

*215-мĕш хăнăхтару.* Çак предложенисенчен пулманнине пĕлтерекен глаголсене çырса илĕр.

Эпĕ ĕçрен хăрамастăп, вĕренме те, ĕçлеме те ӳркенместĕп. Шкултан таврăнсан, урамра нумай выляса çӳреместĕп. Кăшт выляса кансан, уроксем хатĕрлетĕп. Кĕнекесене чĕрместĕп, тетрадьсене вараламастăп, таса тытатăп. Эпĕ шкулта пĕрре те начар отметка илмен.

Пушă вăхăтра эпĕ атте-аннене килти ĕçсене тума пулăшатăп. Хам йĕркеллĕ пулнă пирки, мана атте те, анне те ятламаççĕ.

*216-мĕш хăнăхтару.* Çак глаголсене хире-хирĕçле пĕлтерĕшлĕ глаголсем тупăр.

Кашлать—кашламасть.
Сĕрлет—...
Чупать—...
Шаккать— . . .
Кĕрлет— . . .
Çĕмĕрĕлет— . . .
Чашкăрать— . . .
Хĕрелет— . . .
Вĕрĕ— . . .
Çитĕ— . . .

Аврмасть—аврать
Янăрамасть— . . .
Авăтмасть— . . .
Мĕкĕрмест— . . .
Кĕмсĕртетмест— . . .
Аваăнмасть— . . .
Пиçмест— . . .
Вĕçмест— . . .
Хускалмĕ— . . .
Çĕкленмĕ— . . .

*217-мĕш хăнăхтару.* Çак предложенисенче пĕрйышши членсене тупăр. Вĕсем мĕнле член пулса тăнине каласа парăр.

1. Вăрманта упа, кашкăр, мулкач, тилĕ пурăнать. 2. Чăрăш çулла та, кĕркунне те, хĕлле те, çуркунне те симĕс пулать. 3. Çăкăра эпир ырашран та, тулăран та тăватпăр. 4. Пирĕн анне яшка çине çĕрулми, аш, купăста, сухан, тăвар ярать. 5. Рабочисем заводсенче тракторсем, автомобильсем, автобуссем, трамвайсем туса кăлараççĕ.

## ТУПМАЛЛИ


Стр.

1 §. Ҫу кунӗсене кам мӗнле ирттерни ҫинчен каласа панисем . . . 3
2 §. I тата II классенче вӗреннине аса илни . . . . . . . . . . . 6
3 §. Сӑмах составӗ . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 7
4 §. Пӗр тӗпрен пулнӑ сӑмахсем . . . . . . . . . . . . . . . 12
5 §. Хутлӑ сӑмахсемпе мӑшӑр сӑмахсем . . . . . . . . . . . —
6 §. Сӑмахсен предложенири ҫыхӑнӑвӗ. Предложени членӗсем . . . 16
7 §. Перившши членлӑ предложенисем . . . . . . . . . . . . 22
8 §. Япала ячӗсем . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 26
9 §. Япала ячӗсен хисепӗсем . . . . . . . . . . . . . . . 28
10 §. Япала ячӗсен падежӗсем . . . . . . . . . . . . . . . 30
11 §. Хупӑ сасӑпа пӗтекен япала ячӗсем вӗҫленни . . . . . . . 32
12 §. *А, е* уҫӑ сасӑсемпе пӗтекен япала ячӗсем вӗҫленни . . . . 34
13 §. *У, ӳ* уҫӑ сасӑсемпе пӗтекен япала ячӗсем вӗҫленни . . . . 35
14 §. *Ӑ, ӗ* уҫӑ сасӑсемпе пӗтекен япала ячӗсем вӗҫленни . . . . —
15 §. *И* уҫӑ сасӑпа пӗтекен япала ячӗсем вӗҫленни . . . . . . . 37
16 §. *Й* сасӑпа пӗтекен япала ячӗсем вӗҫленни . . . . . . . . . 38
17 §. Япала ячӗсем предложенире подлежащи е кӗҫӗн член пулни . 39
18 §. *Та, те, тан, тен* аффикссене ҫырасси . . . . . . . . . . 42
19 §. *Та* тата *те* татӑксене ҫырасси . . . . . . . . . . . . . 43
20 §. Хӑшпӗр хупӑ сасӑсем пӗрпеклени . . . . . . . . . . . . 44
21 §. Паллӑ ячӗсем . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 46
22 §. Паллӑ ячӗсем предложенире кӗҫӗн член пулни . . . . . . . 50
23 §. *Лӑ, лӗ* аффикс хушӑнса пулнӑ паллӑ ячӗсене ҫырасси . . . . 51
24 §. Сӑпатлӑ местоименисем . . . . . . . . . . . . . . . . 52
25 §. Сӑпатлӑ местоименисем вӗҫленни . . . . . . . . . . . . 53
26 §. Сӑпатлӑ местоименисен предложенири вырӑнӗ . . . . . . . . 56
27 §. Глаголсем . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . —
28 §. Глаголсем сӑпатланни . . . . . . . . . . . . . . . . . 58
29 §. Глаголӑн вӑхӑчӗсем . . . . . . . . . . . . . . . . . 59
30 §. Глаголсем хальхи вӑхӑтра сӑпатланни . . . . . . . . . . 62
31 §. Глаголсем пулас вӑхӑтра сӑпатланни . . . . . . . . . . 64
32 §. Иртнӗ вӑхӑт . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 65
33 §. Глаголсен тӗпӗ . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 70
34 §. Пулманнине е пулас ҫуккине пӗлтерекен глаголсем . . . . 71
35 §. Глагол предложенире сказуемӑй пулни . . . . . . . . . . 73
36 §. Вӗреннине аса илсе ҫирӗплетмелли хӑнӑхтарусем . . . . . 74



ОБЯЗАТЕЛЬНЫЙ ЭКЗЕМПЛЯР
ДОСТАВЛЕН
Чувашской Книжной Палате
„1 сентября 1948 г.
№ 35



Редактор *Н. Т. Васянка.*

НТ 04305. Подписано к печати 10/VIII—48 г. Объём 5 п/л.
Заказ № 826. Тираж 30000 экз.

Типография № 1 Управления полиграфпромышленности
при Совете Министров ЧАССР

Гор. Чебоксары, ул. Володарского, 5.

1
ОТБ

Цена 1 р. 80 к.

А. С. ОТАЧКИН

ЧУВАШСКИЙ ЯЗЫК

УЧЕБНИК
ДЛЯ III КЛАССА
НАЧАЛЬНОЙ ШКОЛЫ

ЧУВАШГОСИЗДАТ,
Чебоксары — 1948